КУÇМА ЧУЛКАÇ



# СУНАРÇĂ ХАЛЛАПĔСЕМ

Чăвашиздат · 1937 · Шупашкар

ЧĂВАШ
ИЗДАТ
1 9 3 7

КУЗЬМА ЧУЛКАСЬ

# СКАЗКИ ОХОТНИКА

РИСУНКИ
Н. МОХОВА

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСВО
ЧЕБОКСАРЫ 1937

КУÇМА ЧУЛКАÇ

# СУНАРÇĂ ХАЛЛАПĔСЕМ

ЎКЕРЧĔКĔСЕМ
Н. МОХĂВĂН

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
1937 ШУПАШКАР

*КĔÇĔН ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЛЉЛЉИ*

Редактор Н. А. АНДРЕЕВ
Тех. редактор Н. ЯНГАС
Корректор М. РОМАНОВ

---

Послано в произ. 4-II-1937 г.
Подп. к печати 2-III 1937 г.
Уполном. Чувашлита 1937.
Заказ 291. ф. 6. 62х94-16.
Об'ем 6 п. л. Тираж 15.000.

---

Гор. Чебоксары,
типография № 1 Чувашгиза.
Дом Печати.

## СУНАРÇĂ ПУЛСА ПĔР КАÇРАХ ÇĔР ТЕ ИКĔ КУЙАН ТЫТРĂМ

Хисеплĕ ачасем! Хăвăрах пĕлетĕр, манăн атте те, асатте те, асаттен аслашшĕ те сунарçă пулман. Асаттен аслашшĕ кăна мар, пирĕн пĕтĕм йăхра та ĕмĕрне сунарçă пулман. Çавăнпа манран пурте: — Çтаппан пичче, есĕ мĕнле майпа çав тери чаплă та паллă сунарçă пултăн? — тесе ыйтаççĕ.

Тӳррипе каласан, епĕ чаплă та паллă сунарçă пулнинчен нимĕнех те тĕлĕнмели çук. Мĕншĕн тесен ман пек сунарçă пулма такам та пултарать. Чаплă сунарçă пулма пĕр йапала çеç кирлĕ, вăл—темĕн те пĕр шутлама пултаракан пуç пулать. Ун пек ăслă пуç пулсан, вара такам та чаплă сунарçă пулма пултарать. Анчах манăнни пек ăслă пуç кирек камăн та çук çав. Акă мĕншĕн епĕ тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă пулса тăтăм.

Манăн пуç чăнах та питĕ ăслă. Вăл темĕнле тĕлĕнмеле йапаласем те шухăшла-шухăшла кăларать. Тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă пулмали шухăша та вăлах шутласа кăларчĕ. Вăл акă мĕнле пулчĕ.

Епĕ ун чухне вунă çулти ачаччĕ. Епĕ, ытти ачасем пек, имшеркке те хăйусăр пулман; атте тăвакан пур ĕçе те хутшăнаттăм, пысăк ачасемпе пĕрле Йамаш вăрманне куйансем ĕрлеме те кайаттăм. Тӳрех каламала: ман пек паттăр йалта урăх пĕр ача та пулман.

Пĕрре мана, пысăк ачасемпе пĕрле, хамăр йал сунарçисем Йамаш вăрманне куйансем ĕрлеме илсе кайрĕç. Вăрмана çитеспе сунарçăсем пурте уй хĕрне тăрса йулчĕç, пире — ачасене Вĕçкĕн Ваççан Пракухĕ вăрманала илсе кĕчĕ те карталатса тăратса тухрĕ, хăй тепĕр хĕрне çитсе сас париччен пурне те шăп тăма хушса хăварчĕ.

— Ат̆-ат̆-ат̆! — тесе кăшкăрса йачĕ Пракух пурне те карталатса тухнă хыççăн.

Пракух сасси çумне самантрах темиçе тĕрлĕ сасă хутшăнса кайрĕ.

Ат̆-ат̆-ат̆! Охо-охо-охо! Ехе-ехе-ехе!

Епĕр пĕринчен пĕри иртерсе хытăрах кăшкăрса пыратпăр. Çапла кăшкăрса пĕр кĕтӳ куйан хăваласа кăлартăмăр. Уй хĕрне тăрса йулнă сунарçăсем пăшалĕсене хӳплеттерме пуçларĕç. Епĕр татах хавхаланса ĕрлетпĕр, тата хытăрах кăшкăрашса уй хĕрнеле тухма васкатпăр.

Охо-хо-хо!!! Ехе-хе-хе!!!

Вăрмантан пĕрхĕнсе тухсанах пурте пĕр çĕре пухăнтăмăр. Вĕçкĕн Ваçça пăшалне авăрларĕ те катăк шăлĕнчен сурчăкне сирпĕте-сирпĕте калаçма тытăнчĕ:

— Петĕм те, куйан пакăлтах йăванса кайрĕ. Кунпа чарăнса та тăмарăм — самантрах тепĕрне персе антартăм. Пăхатăп, ман паталах виççĕмĕш куйанĕ сиксе пырат̆. Йăпăр-йапăр пăшала тĕллесе тытрăм, анчах епĕ икĕ çăварĕнчен те пенĕ иккен!.. Кăна тытасси пулмарĕ!..

— Тытнисем ăçта вара санăн, Ваçча пичче? — тесе ыйтрăмăр епĕр.

Вĕçкĕн Ваçça, пире илтмĕш пек пулса, çаплах çаптарат̆ сăмахне:

— Ну, иккĕпе те çитĕ-ха терĕм те персе антарнă ку-

йансем патне чупрӑм. Епӗ иккен, вӗсене икӗшӗнне те урисене шалтӑрах хуҫса пӑрахнӑ.

— Куйансем ӑҫта, ҫавна кала-ха есӗ, Ваҫҫа пичче? — тесе ыйтрӗ сунарҫӑсенчен пӗри.

Вӗҫкӗн Ваҫҫа сӳннӗ чӗлӗмне пӗр-икӗ хутчен ӗмсе илчӗ те хӑйӗнчен ыйтакан сунарҫӑ йенне ҫавӑрӑнса тӑчӗ.

— Куйансем-и? — тесе ыйтрӗ вӑл унтан куҫӗсене мӑч-мӑч хупа-хупа илсе.

— Ара, куйансем ҫав, леш персе ӳкернисем.

— Е-ей, вӗсем хам пынине курсанах, пӑшал пуљкисем пек, таҫта тарса ҫухалчӗҫ.

Вӗҫкӗн Ваҫҫа чӗлӗмне тепӗр хут ӗмсе илчӗ те лач сурса айккинеле пӑрӑнчӗ. Унӑн вырӑнне Кусар Матви тухса тӑчӗ.

— Манӑн тата интереслӑрах пулчӗ, — терӗ вӑл хӑйӗн шӗвӗр сухалӗ вӗҫне пӗтӗркелесе. — Епӗ Тӑмвар вӗҫнерех тӑраттӑм. Пӑхатӑп пы-ысӑк карсак ман паталах ҫӗмӗрттерсе пырать. Меллӗрех лектӗр тесе хам патӑмах ҫитертӗм ҫакна. Иксӗмӗр хушши пӗр-икӗ хӑлаҫ ҫеҫ йулсан, хайхине ҫамкинчен тӗллерӗм те кӗрслеттерсе йаратӑп, карсак мӑкӑљт-макӑљт чикеленсе кайрӗ. Пырса пӑхатӑп, — карсакӑн икӗ куҫне те шӑтарса пӑрахнӑ...

— Матви пичче, карсакна кӑтарт-ха! — терӗмӗр епӗр.

— Тӑрса тарчӗ-ҫке мур илесшӗ Ҫамкаран мар, уран пемелеччӗ иккен, тесе ҫеҫ куљанса йултӑм.

— Икӗ куҫӗнчен те лекнӗ пулсан, йепле-ха вӑл сана курса тарма пултарнӑ? — тет Вӗҫкӗн Ваҫҫа, хӑй пӗрре те суйман пек пулса.

— Тарсан та, вӑл манран хӑтӑлаймасть. Епӗ ӑна, суккӑрскерне, хӗле кӗрсен те тытатӑпах, — тет Кусар Матви.

— Есӗр пӑшалпа персе те пӗр куйан тытайман, епӗ

вăт, нимĕн пемесĕрех икĕ куйан тытаттăмччĕ, — тет Карсак Çтаппанĕ çав вăхăтра.

— Йепле апла?! — тесе ыйтрăмăр епĕр пĕр харăсах.

— Акă мĕнле. Пĕр куйанĕ сиксе тухрĕ те ман патала вĕçтерчĕ. Епĕ, тармакланса тăрса, куйана тĕллерĕм, рсе ўкермели çеç йулнăччĕ, манăн икĕ ура хушшинчен тепĕр куйанĕ вăшт тухса кайрĕ. Епĕ, шартах сиксе, палтăрт çеç йăваланса йултăм, çапла вара иккĕрен пĕрне те тытаймарăм.

Сунарçăсем кашнийех хăйсемпе мĕн пулни çинчен каласа пĕтернĕ хыççăн епĕр каллех карталанса тухрăмăр. Каллех темиçе куйан кăларса патăмăр. Анчах вĕсем пĕр куйанне те тытаймарĕç. Çапла епĕр кунĕпе Йамаш вăрманĕ тăрăх кăшкăрашса çўрерĕмĕр. Каçа май ывăнсах çитрĕмĕр, пурин сассисем те тытăнса ларчĕç. Малтан пире кашнинех пилĕкшер пус паратпăр тесе астарса тухнă сунарçăсем, кайран, куйан тытайман тесе, пĕри те пĕр пус памарĕç. Епĕр вара суйеçĕ сунарçăсене тем пекех çиленсе çитрĕмĕр.

— Мĕншĕн пĕр куйанне те тытаймарăр? — тесе ыйтрăм епĕ Вĕçкĕн Ваççаран.

— Ха, йĕпе сăмса мĕн ыйтат тата! — терĕ вăл ман çине шур куçĕсемпе пăхса.

— Хўрисем кĕске çав, çавăнпа тыттармарĕç. Ав манăн ура хушшинченех тухса кайрĕ пĕри, çапах та тытса пулмарĕ, — тет Карсак Çтаппанĕ.

Çакăн хыççăн епĕр вĕсене пĕри пĕр сăмах чĕнмесĕр килеле утрăмăр. Пирĕн йал Йамаш вăрманĕнчен çывăхах мар, çавăнпа епĕр киле тĕттĕм пулсан тин çитрĕмĕр.

Çак вăрăм çулта ĕнтĕ манăн пуç тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă пулмали шухăша шухăшласа кăларчĕ, вăл

шухăш вара мана хама та питĕ килĕшрĕ. Анчах, манăн пĕрре те хамăр йалти суйеçĕ сунарçăсем пек пулас килмерĕ, мĕншĕн тесен епĕ хам тӳрĕ çынна йуратататăп, суйеçтерме пултараймастăп.

Киле таврăнсанах епĕ аттене пăшал илсе пама ыйтрăм.

— Пăшал илсе пар тата ăна,—тесе витлесе илчĕ атте.— Уруна çăпата туса тăхăнаймастăн, пăшал илсе пама ыйтатăн. Сунарçă пулма ĕмĕтлениччен, малтан сăмсуна шăлма вĕренесчĕ, — тесе йатларĕ атте.



Манăн икĕ ура хушшинчен тепĕр куйанĕ вăшт тухса кайрĕ.

Сунарçă пулас шухăша епĕ çапах та пăрахмарăм. Пăрахма мар, вăл шухăш кунсерен ӳссе пычĕ. Тĕлĕкре каç серен уйсемпе вăрмансем тăрăх çӳрекен пултăм, пĕрре кайсах вуншар куйанран кайа мар тытса килекен пултăм.

Çакнашкал тĕлĕксене хĕле кĕричченех курса пурăнтăм. Тĕлĕкре курнипех куйансен йĕрĕсене те паллакан пултăм. Çав йĕрсем тăрăх кайсан, пĕр куйанне те тытмасăр таврăнмастăмччĕ вара.

Пĕрре епĕ, темĕнле сăлтавпа, Трихван мучисем патне кайрăм. Трихван мучи улмуççи пахчине тухнă та сура-сурах куйансене йатлаçат: капла пулсан пĕтĕм сата пĕтереççĕ кусем, тесе вăрçат.

Пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм. Трихван мучин улмуççи пахчинче куйансем урлá-пирлĕ йĕр туса пĕтернĕ, улмуççисене кăшласа шап-шурă туса хăварнă.

—Сунарçисем питĕ йапăх-çке пирĕн. Хăйсем шăши тытма пĕлмеççĕ, çапах та мухтанса çӳреççĕ,—тет Трихван мучи. Çакăн хыççăн епĕ Трихван мучисен пахчине килекен куйансене тытса пĕтересси çинчен шутлама пуçларăм. Манăн пуç вĕсене мĕнле тытмали меле часах шутласа тупрĕ. Çулла нӳхрепе хăйма вăрлама кĕрекен Матви пиччесен кушакне атте мăйкăч лартса тытнăччĕ. Çакна аса илтĕм те епĕ те Трихван мучисен пахчине килекен куйансене мăйкăчпа тытма шутларăм. Тепĕр кун кунĕпе мăйкăчсем йаврăм—пурĕ çĕрте икĕ мăйкăч хатĕрлерĕм. Каçпа, йаш-кĕрĕмсен вăййи лăплансан, вăл мăйкăчсене пурне те Трихван мучисен пахчине кайса улмуççисем çумнеçыхса сара-сара хăвартăм, ирпе аннене ирех вăратма хушрăм.

Анчах çывăрасси пулмарĕ, çутăлассине кĕтсех çĕре ирттерсе йатăм. Кантăкран кăвак çути кĕре пуçласанах епĕ йăпăр-йапăр тумлантăм та тӳрех Трихван мучисен пахчине чупрăм. Пуç мĕн шутлани тĕрĕсех пулчĕ. Куйансем мăйкăчсене çакланнă та унтала-кунтала çеç сиккелесе тăраççĕ.

Епĕ çав тери савăнса кайрăм. Карсак Çтаппанĕ куйансен хӳрисем кĕске тенĕрен, епĕ чи малтан вĕсен хӳрисене пăхрăм. Вăл пĕрре те суйман иккен, куйансен хӳрисем чăнах та кĕске. Ку вара ман ĕçе чутах чăрмантарса хуратчĕ.—Мĕнле илсе кайас кусене, тетĕп. Епĕ вĕсене хӳрисенчен тытсах кайасшăн пулнăччĕ. Аран-аран килте



Манӑн куйансем ҫил пек ҫӗмӗрттерсе кайрӗҫ, хам килнӗ йӗр тӑрӑх тӳрех хамӑр пата пырса кӗчӗҫ.

çунашка пурри çинчен аса илтĕм. Куйансене çаплипех хăвaратăп та хам çунашка патне чупатăп.

Манăн кил ытлах инçе пулманран, çунашкана часах илсе килтĕм те куйансене кӳлме пуçларăм. Вĕсем калама çук савăнса кайрĕç. Мĕншĕн савăннине епĕ часах чухласа илтĕм. Вĕсен текех шăнса тăрас килмен иккен, пурте ăшă пӳрте кайма васканă. Çакна пĕлсен, епĕ вĕсене самантрах кӳлсе лартрăм. Хам вăрăм çапă илтĕм те ехе-хех! тесе кăшкăрса йатăм. Манăн куйансем çил пек çĕмĕрттерсе кайрĕç, хам килнĕ йĕр тăрăх тӳрех хамăр пата пырса кĕчĕç. Çапла епĕ пĕр каçрах çĕр те икĕ куйан тытрăм.

Епĕ çĕр те икĕ куйан тытнă хыпар часах пĕтĕм йала сарăлчĕ. Тул çутăлнă çутăлман пирĕн пата халăх капланса килчĕ. Карта тулли куйана курсан, çынсем пĕççисене çапсах тĕлĕнчĕç. Карсак Çтаппанĕ те хашкаса чупса çитрĕ.

—Тархасшăн каласа пар-ха, мĕнле майпа тытрăн есĕ çакăн чухлĕ куйан?—тесе ыйтат манран.

—Каласа парсан та усси çук, есĕ вĕт урусем хушшинчен тухса тарнă куйана та тытайман, терĕм епĕ ăна.

Карсак Çтаппанĕ помидор пекех хĕрелсе кайрĕ те пĕр сăмах чĕнмесĕрех тухса утрĕ. Ун хыççăнах пирĕн пата Трихван мучи пырса кĕчĕ. Вăл мана пуçран лăпкарĕ те пăшал илме тесе кăсйинчен пилĕк тенкĕ укçа кăларса пачĕ.

Çакăн хыççăн епĕ пĕр иккĕленмесĕрех тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă пулма шутларăм. Анчах ун пек чаплă сунарçă пуличчен манăн пайтах тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем тытса, хам çинчен пĕтĕм таврана мухтавлă йат сармала пулчĕ. Вăл мухтавлă йат хам вăтăр çул тултарнă тĕле тин сарăлса çитрĕ. Сире ёнтĕ, çав йат сарăлнă хыççăн тĕмĕн тĕрлĕ тискер кайăксемпе вĕçен кайăксене хам тĕлĕнмеле мелсемпе тытни çинчен каласа парам.

## ТИЛĔ ТЫТМА ТА ВĔРЕНТĔМ

Хăвăрах пĕлетĕр, пирĕн йалта сунарçăсем питех нумай пулнă. Кăтра Карачăм, Кусар Матви, Вĕçкĕн Ваççа, Карсак Çтаппанĕ, Çатма Петĕрĕ тата ыттисем те. Чылайĕшĕн йачĕсене те маннă ĕнтĕ епĕ.

Анчах вĕсем пĕри те ман пек пултарайман. Хăшĕ-пĕрисем хĕлĕпе те пĕр куйан тытайман. Хăйсем çаплах кунĕ-кунĕпе çăпата çĕтсе çӳретчĕç.

Кăтра Карачăм хăйне чи ватă сунарçă тесе шутлатчĕ. Ваттине ватахчĕ ĕнтĕ: пичĕсем пĕркеленсе пĕтнĕччĕ, сухалĕ кăвакарса шĕвелсе йулнăччĕ, пуç тӳпинче пĕр çӳç пĕрчи те çукчĕ. Çапла пулин те, ăна никам та чаплă сунарçă тесе шутламан. Вăл тискер кайăксен йăлисене те пĕлместчĕ: упа пыл çиме йуратмаст, пилеш тесен каççах кайат, тетчĕ.

Кусар Матви тата: — Манăн асатте те, асаттен аслашшĕ те сунарçă пулнă, — тесе мухтанатчĕ. Анчах хăй пĕр куйан тытса курмасăрах вилсе кайрĕ.

Вĕçкĕн Ваççа вара суйеçтерес тĕлĕшпе пуринчен ирттерсе йаратчĕ. Çавăншăнах ăна Вĕçкĕн Ваççа тесе йат пачĕç. Вăл та, Кăтра Карачăм пекех, хăй ĕмĕрĕнче пĕр куйан та тытса курайман пулмала. Намăс курас мар тесе хăй йаланах пĕччен çӳретчĕ. Йулашкинчен çак Ваççа кунсерен пĕрер куйан çакса килекен пулчĕ, куйанне вара çу-

рăмĕ хыçне çакатчĕ те урам тăрăх йерипен те мăнкăмăллăн утса пыратчĕ.

— Ваçça пăйахам, йепле пĕтмеççĕ куйансем саншăн? — тесе тĕлĕнсе ыйтатчĕç кӳршĕ арăмĕсем.

— Ваççашăн куллен çирĕмшер куйан çуралса пырат,— тетчĕ вăл ыйтакансем çине пăхмасăрах.

Анчах епĕ Ваççана нихăçан та ĕненместĕп. Çавăнпа пĕрре унăн хыçĕнчен кайса сăнарăм. Ваçça Тăмвар тĕлне çитрĕ те манăн куçран пач çухалчĕ. Епĕ ниçтала кайма аптăраса чĕлĕме тапак тултарма тытăнтăм. Чĕлĕме чĕртсе те йараймарăм, — Ваçça тепĕр йенчен куйан çакса та тухрĕ. Тĕлĕнсех кайрăм, йепле-ха ку пăшал пемесĕрех куйан тытрĕ, тетĕп. Каçпала капкăн лартса хăварман-ши ку тесе, йурийех вăл тухнă вырăна кайса пăхрăм. Ак, тамаша, Ваçça тухнă вырăнта сӳс ланчашкисем çеç вĕçкелесе тăраççĕ. Вĕçкĕн Ваçça куйанне мĕнле тытнине часах тавçăрса илтĕм. Ку, иккен, улталат. Епĕ ун хыççăнваскарăм. Ваçça йаланхи пекех куйанне çурăмĕ хыçне çакнă та йерипен утса йалала кĕрет.

— Аван-и, Ваçça пичче? — тетĕп.

— Аван, аван! Акă пĕрне анкарти хыçĕнчех персе ӳкертĕм-ха, — тет.

Манăн унăн куйанне тытса пăхас килчĕ. Анчах Ваçça йахăнне те йамаст. Епĕ çапах та куйана хӳринчен йарса илтĕм. Ваçça куйана карт туртрĕ, куйан ăшĕнчен виç çурăм тыллана сӳс лĕпĕс йăтăнса тухрĕ. Манăн алла куйанăн хырăмне çĕлесе лартнă çип вĕçĕ кĕрсе кайнă иккен. Ваççа пĕр шуралса, пĕр хĕрелсе илчĕ те, нимĕн чĕнмесĕр, хăвăрттăн малала утрĕ. Çакăн хыççăн вăл сунарçă маррине хамăр йал çеç мар, пĕтĕм тавра пĕлсе çитрĕ. Вăл иккен

Çĕрпӳ пасарĕнче куйан тирĕ илнĕ те, унăн ăшне сӳс чиксе кунсерен мухтанса çӳренĕ.

Ытти сунарçăсем те Вĕçкĕн Ваççаран ăстах пулман. Çатма Петĕрĕ кăна пăртак пултаратчĕ. Мана хама та тилĕ тытма çав вĕрентрĕ. Вăл акă мĕнле пулчĕ.

Пĕрре епĕр хурал пӳртĕнче халапласа ларатпăр. Çатма Петĕрĕ хĕрсе кайсах калаçат:

— Есĕр пĕри те ман пек пултараймастăр, — тет. — Епĕ вăт, тилĕн йĕрне çеç курам, тилли ман алра пулатех, — тет.

— Суйатăн, — тет Вĕçкĕн Ваçça, — сирĕн пеккисене çын тытнине курсан та çитетчĕ, — тет.

— Сирĕн пеккисем куйан ăшне сӳс ланчашки тултарнипе те кăмăллă пулаççĕ мĕн. Миçе хутчен сĕтĕрсе çӳрерĕн-ха çав куйан тирне кăçал йал тăрăх? — тесе хучĕ Çатма Петĕрĕ Ваççана.

Епĕр пĕр тапхăр кулса илтĕмĕр те каллех Çатма Петĕрне каласа пама ыйтрăмăр.

— Питех ĕненместĕр пулсан, атăр Йамаш вăрманне, — тет çак. — Тилĕ йĕрне шыраса тупăпăр та, тиллине тытнине хăвăрах курăр, — тет.

Вăл самантрах лашине кӳлчĕ те пире Йамаш вăрманне лартса кайрĕ.

Вăрмана епĕр лăпах кăнтăрла умĕн çитрĕмĕр. Çатма Петĕрĕ лашине пĕр вар пуçне тăратса хăварчĕ те пире вăрман ăшнех йертсе кайрĕ. Хамăр карталашса тилĕ йĕрĕ шыраса пыратпăр. Нумайах та каймарăмăр, Кăтра Карачăм кăшкăрса та йачĕ: — Акă, тупрăм, килĕр-ха кунта часрах! — тет.

Вăл тилĕ йĕрĕ çине тухнă мĕн.

Пурте Кăтра Карачăм патне чупса пытăмăр. Чăнах та

Карачăм умĕнче тин çеç хывса хăварнă йĕр тăсăлса выртат. Епĕр ун тăрăх йĕрлесе кайрăмăр та, часах пĕр чăтлăх тĕлне пырса тухрăмăр.

— Шăп пулăр, — тет Çатма Петĕрĕ. — Есĕр çакăнта тăрăр, епĕр, Лапшу Çтаппанĕпе, çак чăтлăх тавра çавăрăнса килĕпĕр, — тет.

Сунарçăсем тăрса йулчĕç. Епĕр, Çатма Петĕрĕпе, чăтлăх тавра кайрăмăр. Петĕр çурăмĕ хыçне уртса йанă михĕ ăшĕнчен пĕр çĕклем кантра кăларчĕ.

— Мĕн тăвасшăн есĕ ку кантрапа? — тесе ыйтатăп çакăнтан.

Çатма Петĕрĕ нимĕн чĕнмесĕрех кантрана хамăр хыçран карса пыма тытăнчĕ. Епĕ тĕлĕнсех кайрăм. Кантри çине кашни пĕрер метртанах хĕрлĕ хăмач татакĕсем çыхса тухнă, вĕсем пирĕн хыçран йалавсем пекех илемлĕн вĕçсе йулаççĕ. Çапла епĕр, хăмач татăкĕсем çыхнă кантрана карса, хамăр малтан кайнă вырăнах пырса тухрăмăр. Ку тĕлте Çатма Петĕрĕ вунă метра йахăн кармасăрах хăварчĕ.

— Халех тытăпăр тиллине, — тет Петĕр. — Анчах малтан иккĕн шалала кĕрсе йерипен калаçкаласа çӳрĕр. Астăвăр, хуллен калаçăр. Хытă шавласан тилле тытаймăпăр та, — тесе хытарат.

Кусар Матвипе Вĕçкĕн Ваççа чăтлăха кĕрсе кайрĕç, епĕр, Петĕрпе иксĕмĕр пĕр пысăк çăка хыçне пытанса йултăмăр.

Унччен те пулмарĕ, мана Петĕр айакран кăрт тĕртсе илчĕ. Шалала пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм — шалта, чăтлăхра, тилĕ урлă та пирлĕ чупса çӳрет, хăмачлă кантра патне çывхарсанах кайала пĕрхĕнет. Çапла çӳресен-çӳресен çак тилĕ кантра карман вырăна шыраса тупрĕ те тӳрех

пирĕн патала çул тытрĕ. Вăл çитесси çич-сакăр утăм çеç тăрса йулнăччĕ, Петĕр тĕллерĕ те пĕрре персех тилле йăвантарса йачĕ. Епĕ, тĕлĕнсе хытсах кайрăм.

Тилле çапла тĕлĕнмеле мелпе тытнă хыççăн, епĕ кунсерен Çатма Петĕрĕ патне çӳреме тытăнтăм.



Петĕр тĕллерĕ те пĕрре пенипех тилле йăвантарса йачĕ.

— Петĕр пичче, каласа пар-ха, тилĕ йаланах хăмачлă кантра карман вырăна тухат-и? — тесе ыйтаттăм.

Анчах вăл, темĕн чухлĕ йăлăнсан та, мана тӳррипе каласа памастчĕ.

— Петĕр пичче, асту, — терĕм ăна пĕреччен. — Хăçан та пулсан епĕ те кирлĕ пулăп-ха, — терĕм.

Çатма Петĕрĕ çапах та хăйĕн мелĕ çинчен ăнлантарса памарĕ. Вара епĕ çиленнипе килеле тухса утрăм, хам çул

тăршшипех тилĕсене тытасси ҫинчен шутласа пытăм.

Ачасем, хăвăрах пĕлетĕр, ҫакăн пек чухне манăн пуҫа калама ҫук ăслă шухăшсем пырса кĕреҫҫĕ. Епĕ ҫĕрĕпе шутласа выртрăм, ире хирĕҫ тилĕсен йăлисене веҫех суйла-суйла ăнкартрăм. Вĕсем ире май апат шыраҫҫĕ иккен, кăнтăрла пĕр чăтлăха кĕрсе выртса канлĕн ҫывăраҫҫĕ. Тилĕсем ҫĕре выртса ҫывăрмаҫҫĕ: вĕсене унта кашкăрсем, упасем, шакалсем тытса вĕлерме пултараҫҫĕ. Ҫавăнпа вĕсем йе пысăк ҫăка хăвăлне кĕрсе, йе пĕр-пĕр хуҫăлса аннă йăвăҫăн ҫўлĕ тункати тăрне хăпарса выртаҫҫĕ. Тилĕ йĕрĕ чăтлăха кĕрсе кайсан, вара пĕрре те иккĕленмели ҫук, тилли те ҫавăнтах пулат.

Ăста сунарҫăсем ҫакнашкал вырăна тупсан, вăл чăтлăх таврала хĕрлĕ хăмач татăкĕсем ҫыхнă ҫип йе кантра карса тухаҫҫĕ, пĕр вырăна кармасăр хăварса, унта тĕл пере-кен сунарҫа тăратаҫҫĕ те хăйсем малала кĕрсе кайаҫҫĕ.

Тилĕ чейе. Вăл темĕнле пĕчĕк сасса та таҫтанах илтсе тарма пултарат. Ҫавăнпа шала кĕрсе кайакан сунарҫăсем йерипен калаҫса ҫўренипех канлĕ ҫывăракан тилле вăратма пултараҫҫĕ. Вĕсен сассине илтсенех, тилĕ вăранса, самантрах йĕри-таврала пăхса илет, шалта утса ҫўрекен сунарҫăсене курат. Тунката ҫинчен йерипен сиксе анат те тарма пикенет. Анчах часах вăл карса хăварнă хăмачлă кантра патне ҫитсе тухат.

Тилĕсем нихăҫан та ҫав карса хăварнă кантра урлă каҫса каймаҫҫĕ. Вĕсем йаланах кайала ҫаврăнса тата хытăрах тарма пикенеҫҫĕ. Анчах вĕсен ҫулне каллех ҫавнашкал кантра пўлсе лартат. Тилĕсем вара, тарăхса ҫитсе, пит хытă калла-малла чупса ҫўреме пуҫлаҫҫĕ. Ҫапла вĕсем, кантрапа карса хăварман вырăна тупса, унтан ҫил-ҫĕмрен пек тухса сунарҫăсенчен хăтăлма ĕмĕтленеҫҫĕ. Паллах, вĕ-

сен ĕмĕтленни те ахалех пулаť, вĕсене унта сыхласа тă-ракан сунарçă пере-пере ӳкерет.

Пĕр каç шутласа выртса епĕ çакна çеç маŕ пĕлтĕм. Епĕ чăтлăхала кĕртсе йанă Кусар Маťвипе Вĕçкĕн Ваççана Çатма Петĕрĕ мĕншĕн йерипен калаçма хушнине те ăн-лантăм. Шалала кĕрсе кайакансем хытă шавланипе канлĕ çывăракан тилĕ сасартăк вăранса кайаť те, ăна кăна тав-çăрса илмесĕр, хăмачлă кантрана асăрхаймасť, вăл ун ур-лă каçса кайаť. Вара, паллах, кантра кармасăр хăварнă вырăнта темиçе кун кĕтсе ларсан та, пĕр тилĕ те тытай-мастăн.

Пурне те паллă, — çакнашкал лайăх меле Çатма Петĕ-рĕ нийепле те хăй тĕллĕн шутласа кăларма пултарайман. Вăл ăна такамран илтсе çеç пĕлме пултарнă. Анчах çак мел тилĕсем тытма лайăх пулсан та, епĕ ăна килĕштерме-рĕм. Килĕштерме те май çук, мĕншĕн тесен пĕр тилĕ ты-тас пулсан пиллĕкĕн-улттăн ланккаса çӳремеле, кантра йавмала, кантрине хăмачсемпе илемлетмеле, йулашкинчен ăна йăтса çӳресе ăшша пиçмеле. Епĕ унашкал сунарçă мар. Епĕ пĕччен кайсах кунне пилĕк тилĕрен кайа мар тытма йуратататăп.

Çапла епĕ хам тилĕсем тытмали çăмăл мел шутласа кă-лартăм. Шантарсах калатăп: ун пек меле Çатма Петĕрĕ мар тĕнчери пĕр сунарçă та шутласа кăларас çук. Вăл мел ма-вăн питех те çăмăл, унпа епĕ каçшерен вăтăршар йе ыт-ларах та тилĕ тытса таврăнаттăмчĕ. Çавăн пек лайăх та çăмăл меле манăн пуç акă мĕнле шутласа кăларчĕ.

Çулла, Ĕсмĕл пасарĕнчен таврăннă май, манăн Йамаш вăрманĕ урлă каçмала пулчĕ. Епĕ çулсăр-мĕнсĕрех утрăм, çапла хĕлле Çатма Петĕрĕ тилĕ тытнă вырăна пырса тух-рăм. Килнĕ килнех, тавай çав чăтлăха та кĕрсе курам те-



Тилĕсем епĕ чавнă шăтăка пĕрин хыççăн тепри ÿксе пыраççĕ.

се шутларăм. Шаларан шала кĕрсе пыратăп, ăçта пăхнă унта ура пусмала мар çатрака та чăтлăх ларат. Çапла епĕ пĕр тарăн вар хĕррине пырса тăтăм. Унăн тĕпне ĕмĕрне те çын анса курман пулĕ, мĕншĕн тесен çӳлтен пăхсан тĕпĕ те курăнмаст. Епĕ ăна-кăна пăхмасăрах çырма тĕпне анса кайрăм. Пăхатăп та шалт тĕлĕнсе кайатăп — çырма тĕпĕнче ăçта пăхнă унта тилĕ чĕпписем кĕшĕлтетсе çӳреç-çĕ. Е-е, ку варта тилĕсен йăви иккен терĕм, ну пур-нăç кайрĕ Лапшу Çтапанĕн, терĕм. Шутлама тытăнтăм тилĕ йăвисене. Анчах шутлана çĕртех каç пулса ларчĕ. Питĕ хĕпĕртесе таврăнтăм епĕ вăл кун пасартан.

Кĕркунне йур çăвас умĕн, епĕ çав вар тĕпне пысăк шăтăк алтрăм та унта хăмаран çапса тунă тарăн йешчĕк кĕртсе лартрăм. Хĕллехи тăман каçсенче епĕ йаланах çав йешчĕке чĕрĕ куйан кайса йараттăмчĕ. Манăн йĕре асар-писер сăлпăран тăман хам хыççăнах çĕтерсе хăваратчĕ.

Тилĕсем куйан шăршине темиçе çухрăмранах сисеççĕ. Вĕсем вара, выçă майĕпе, пĕрне-пĕри ăмăртсах çав куйан патнеле чупаççĕ, епĕ чавнă шăтăка пĕрин хыççăн тепри ӳксе пыраççĕ. Куйанĕ хытăран хытă çухărат, тиллисем унăн сассине илтсе таçтан-таçтан пуçтарăнса килеççĕ.

Çапла епĕ каçшерен вăтăршар, хĕрĕхшер тилĕ тытса Ĕсмĕл пасарне лавĕ-лавĕпе тилĕ тирĕ ăсататтăм. Çакăн хыççăн манран хамăр йалти сунарçăсем кăна мар, пĕтĕм таврари сунарçăсем те тĕлĕне пуçларĕç. Çатма Петĕрĕ те кунсерен ман пата пырса йăлăнма тытăнчĕ.

— Çтаппан шăлнăм, тархасшăн каласа парсам ĕнтĕ: есĕ мĕнле çавăн чухлех тилĕ тытатăн? — тесе минрететчĕ.

— Çăкăр-тăвар хире-хирĕç теççĕ вĕт, Петĕр пичче, — теттĕм епĕ ăна. Çав вăхăтрах хам лаша кӳлсе каçпа шăтăка тулса ларнă тилĕсене тийеме тухса кайаттăм.

## ПĂСАРА ПИРКИ ЁМĔРТЕ ПĔРРЕ СУЙМА ТА ТИВРĔ

Пĕр çулхине манăн карчăк, йăвăрах чирлесе, виçĕ уйăх выртрĕ. Хуйхăрнипе хам та чутах чирлесе кайаттăм, ыхра çинипе çеç хăтăлкаласа йултăм.

Карчăк чирлĕ вăхăтра епĕ йаланах шыв кӳме хам кайаттăм. Çăл патĕнчен шалтах тĕлĕнсе тавăрăнаттăм. Кунта кӳршĕ арăмĕсем пуçтарăнатчĕç те текех йалта мĕн курни-илтни çинчен пакăлтататчĕç.

— Пайан ирпе Патун Микихвер кинĕн сурăхĕ икĕ путек туса панă, тет, иккĕшĕ те тата така пулнă, тет.

— Ěнер Карсак Çтаппанĕн аслă хĕрĕ икерчĕ пĕçернĕ чух çатмине ӳкерсе çĕмĕрнĕ, тет те амĕшĕ вара кунĕпех хирĕлсе çӳренĕ, тет.

— Вăл хĕртен хĕр пулмарĕ ĕнтĕ. Çăкăр пĕçерме те пĕлмест те, ара вăрçмасăр ăçтан чăтăн... Кăçал хĕлĕпе те ик хутăр çеç тунă, тет вăл.

— Çĕрĕк каçпа тата Таруç инкесем чут çеç вилсе выртман, тет.

— Мĕн пулнă-ши апла?!

— Кĕçĕн кинĕ кăмакине иртерех хупнă, тет те вара пурне те сĕрĕм тивнĕ, тет.

Мĕн çинчен кăна калаçмастчĕç-ши вĕсем! Унта Кукша Иванпа Вĕçкĕн Ваççа ыран пĕрле мунча хутса кĕме

шутлани çинчен те, Çатма Петĕрĕн арăмĕ çулă пăтă пĕçерсе çитерни çинчен те тата тем-тем çинчен те калаçатчĕç. Епĕ итлесе тăраттăм та шалтах тĕлĕнсе кайаттăм,—пĕрре шыв патне кайнипех пĕчĕк йалти пур хыпарсене те пĕлсе таварăнаттăм.

Пĕрре çапла епĕ ирех шыв кӳме кайрăм. Çăл патĕнче хĕрарăмсем йаланхи пекех хĕрсе калаçаççĕ.

— Сăмах çинех çитрĕн, Çтаппан пăйахам,—тет мана Тури Хветут арăмĕ.

— Мĕн пулчĕ тата йе мана çиме тапратнăччĕ-и?—тесе ыйтатăп çакăнтан.

— Ыр çын çинчен ыррисĕр пуçне мĕн каламали пултăр, тесе тĕртсе хурат Путек Çтаппанĕн карчăкĕ.

— Çапах та, ман çинченех сăмах тапратнă пулĕ-ха есĕр,—тетĕп.

— Çĕркаç Курти пиччесенне пĕр тăрукăнах пилĕк чăх пăвса кайнă-çке!..—теççĕ хĕрарăмсем.

— Темĕнле çавнашкал чăх пăвакан кайăксем нумайланса карĕç кăçал.

— Сана килнех пырса каласшăнчĕ-ха, çав кайăксене тытса пĕтерсемчĕ!—теççĕ.

— Чăхсемсĕр тăрса йулатпăр, тытса пĕтерсемчĕ çав мур кайăкĕсене?—тесе йăлăнаççĕ.

— Ăçтан пĕлетĕр-ха есĕр вĕсем кайăкне?—тетĕп.

— Ара, Курти мучи карчăкĕ хăйех курнă, тет. Хĕрĕх уралă, кайăкĕ хытă чупат, тет.

— Апла пулсан, йепле тытăп-ха епĕ вĕсене, манăн икĕ ура çеç вĕт, тетĕп.

— Темиçе çĕр ура пулсан та есĕ тытатăнах вĕсене,—теççĕ хĕрарăмсем.

— Карчăк сывалтăр-ха, вара пĕтĕмпех тытса пĕтерĕп, терĕм те килеле васкарăм.

Тепĕр кунне çăл патĕнче хĕрарăмсем каллех чăхсене пăвса кайни çинчен калаçаççĕ.

— Курти мучисенне татах пилĕк, Кучан Микулайĕнне икĕ чăх, Мускав Петĕрĕнне çичĕ чăхпа пĕртенпĕр автанне пăвса кайнă тет, — тет пĕр арăмĕ.

— Ей, тур-тур, мăнтарăн автанĕ, ытла та хитре автатчĕ-çке çав. Ăна пăвиччен Сахрун Мĕкĕтин автанне пăвмала пулнă, — тет тепĕр арăмĕ.

— Çтаппан пăйахам, тархасшăн тытса пĕтер вăл кайăксене! — тесе каллех тархаслаççĕ мана çак арăмсем.

Епĕ каллех сăмах та хушмарăм, — килеле утрăм. Тепĕр кунне йалта çакнашкал хыпар сарăлчĕ: Курти мучисем йулашки чăххисене тĕпсакайне лартнă пулат те çĕрĕпех сыхласа ларнă пулат, анчах чăххисене унтан та пăвса кайнă пулат; Вĕçкĕн Ваççа арăмĕ хăйĕн чăххисене ăшă витене хупнипе çеç çăлса хăварнă пулат.

Çак хыпарсене епĕ питех ĕненмерĕм, анчах кайарахпа вĕсем чăн пулнине хам куçпах куртăм. Йалта чăхсем сахалансах пыра пуçларĕç, йал хĕррисенче, çырма пуçĕсенче чăх виллисем нумайран нумай тĕл пула пуçларĕç. Çынсем чăххисене тĕпсакайĕсене, витесене хупса усрама тытăнчĕç. Çакăн хыççăн вара йалти пĕтĕм хĕрарăмсем хам киле пырсах тархаслама тытăнчĕç.

Хăвăрах пĕлетĕр, епĕ мăн кăмăллă çын мар, епĕ çынсене нумай пуççаптарса тăма йуратмастăп. Манăн чирлĕ карчăкпа выљăх-чĕрлĕхсене йалти арăмсем черетпе пăхма пулчĕç те, епĕ вара чăхсене пăвакан кайăксене тытса пĕтерме килĕшрĕм.

Малтан епĕ вăл кайăксен йĕрне сăнарăм. Халиччен пă-

сарасем тытса курман пулин те, чăхсене вĕсем пăвнине часах чухласа илтĕм.

Пăсарасем çинчен епĕ ытти сунарçăсенчен çакна илтнĕччĕ. Вĕсем туглă çиме йуратаççĕ, çавăнпа чăх ашне кăмăлларах параççĕ. Пăсара питех те чейе, çын пынине вăл таçтанах сисет те тĕплĕ çĕре пытанса ларать. Ăна тем пек ăста сунарçăсем те пурте тытма пултараймаççĕ. Çав сунарçăсемех мана пăсара тирĕ хаклă тăни çинчен те каласа панăччĕ.

Такам та пĕлет, манран темĕнле чейе кайăк та тарса



Шашкăпа пĕрле пăсара йĕрĕсем тăрăх кайрăмăр.

хăтăлаймасть. Анчах пăсара тирĕ хаклă тăрать тенĕрен вĕсене пăшалпа мар, алтуйипех персе тытма шутласа хутăм. Пăшалпа персе шăтăкланса пĕтнипе тирĕ йӳне кайма пултарать, терĕм.

Çапла епĕ йуманран сулăмлă алтуйи турăм та, Шашкăпа пĕрле пăсара йĕрĕсем тăрăх кайрăмăр. Йĕрсем пурте Йамаш вăрманне пырса тухрĕç.

Йамаш вăрманĕ калама çук пысăк. Унта темĕн тĕрлĕ тискер кайăксем йышлă пурăнаççĕ, çавăнпа нумай сунарçăсем вăл вăрмана шалала кĕме те шикленеççĕ. Çапла пулин те епĕ хăраса туса тăмарăм. Епĕр, Шашкăпа иксĕмĕр, йĕрсем тăрăх çак вăрмана çитсе шалала кĕрсе кайрăмăр. Анчах пынăçемĕн тĕлĕнмеле йапала пулса пырать: пăсара йĕрĕсем çăкасем тĕлне çитеççĕ те пĕте-пĕте лараççĕ. Ăçта хăйамата пытанаççĕ кусем?—тетĕп. Пакшасем пек йăваç тăрринче пурăнмаççĕ-ши тесе, çӳлеле пăхатăп,—пĕр пăсара та курăнмасть.

Çапла лăпах кăнтăрлаччен йур ашса çӳрерĕмĕр вăрманта. Кун каç йенне кайа пуçларĕ. Мĕн тăвас?—тетĕп. Самантрах ман пуç тĕлĕнмеле ăслă меслет шухăшласа кăларчĕ. Ара, çăка хăвăлĕнче пурăнмаççĕ-ши кусем?—терĕм.

Пăсара йĕрĕ çухалнă ват çăка тĕлне çитетĕп те алтуйипе шан! тутаратăп. Çăка хăвăлĕнчен сасартăк алла йахăн пăсара сиксе тухрĕ. Манăн Шашкă пĕрин хыççăн тепĕрин çине сиксе ӳксе, пăва-пăва хăварать, Шашкăн ал çитменнине хам алтуйипе пере-пере антрататăп. Çапла Шашкăпа иксĕмĕр пĕр хăвăлтан тухнă пăсарасене пĕтĕмĕшпех тытрăмăр. Шутларăм та лăпах сакăр пăсара пулнă иккен.

Чăнах та пăсара тирĕ калама çук аван. Пĕрре килнĕскер арăм ваљљи те, хам ваљљи те кĕрĕклĕх çителĕклех



Шашкăна мăкла така тирĕнчен ҫĕлетнĕ алса ăшне кĕртсе, ҫӳлĕрех тунката ҫине лартрăм та пăсарасене сыхлама хушса хăвартăм.

тытас терĕм. Алтуйипе ҫăка хыҫҫăн ҫăкана шаккаса ҫӳретĕп. Кашни хăвăлĕнченех пĕрер кĕтӳ пăсара сиксе тухать, епĕр тытнă пеккине вар пуҫне купаласа пыратпăр.

Ҫапла тул ҫутăлнă ҫĕре вар пуҫне хĕррисемпе тан пăсара тытса купаларăмăр. Шутлама тытăнтăм, пилĕк ҫĕртен те иртрĕ, купара татах та нумай — виҫĕ кунта та шутласа пĕтерес ҫук.

Хамран хам тĕлĕнсе кайрăм. Халиччен пĕр сунарҫă та ҫакăн чухлĕ пăсара тытни ҫинчен илтменччĕ, пĕрререн пĕрре тухсах мĕн чухлĕ пăсара тытрăм-ха, тетĕп.

Пăсарисемпе аппаланса, хам та сисмен, тул ҫутăлсах кайнă. Епĕ хайхи кусене киле йепле илсе кайасси ҫин-

чен шутлама пуçларăм. Аслă пуçăм кунта та лайăх мел тупса пачĕ. Шашкăна мăкла така тирĕнчен çĕлетнĕ алса ăшне кĕртсе, çӳлĕрех тунката çине лартрăм та пăсарасене сыхлама хушса хăвартăм. Хам васкасах йала, пăсара нимине чĕнме чупрăм. Анчах вăрмантан та тухаймарăм, мана хирĕç Йамаш стрилукĕ Йарми Сахарĕ пыра парат. Йарми Сахарне питех те усал çын тетчĕç, çавăнпа епĕ хăрасах кайрăм. Ку усал манăн пăсарасене туртса илме те пултарат-çке, терĕм. Вара йуратнă карчăка кĕрĕк те çĕлетсе тăхăнтартасси пулас çук, терĕм.

— Мĕн туса çӳретĕн кунта? — тесе ыйтат çак манран.

— Йе пĕлместĕн-и мĕн кирлине? — тетĕп. Епĕ вĕт Лапшу Çтаппанĕ пулатăп, куйансем пур-ши тесе тухрăм та, — çук, тетĕп.

— Санăн куйану мĕн вăл, акă манăнне каçпа виçĕ тĕп çăка касса кайнă, есĕ курмарăн-и кам каснине? — тет.

— Каснине курман та, анчах çăкисене турттарса кайнине куртăм, виçĕ мăн лав тийесех Пахчал йеннеле анса кайрĕç, тетĕп.

Йарми Сахарĕ савăнсах Пахчал йеннеле вĕçтерчĕ. Епĕ те васкасах хамăр йалала утрăм. Епĕ пĕр купа пăсара тытни çинчен пĕлсен, пĕтĕм йал çĕкленчĕ, пурте пăсара нимине пырасшăн. Анчах епĕ пилĕк лав та çитет, терĕм. Чăнах та пилĕк лав çине шăнăçтартăмăр та киле аран-аран латăртаттарса çитертĕмĕр.

Çав пăсарасене пула манăн ĕмĕрте пĕрре суймала пулчĕ. Хăвăрах шутлăр-ха, çавăн чухне Йарми Сахарне суйман пулсан, арăмпа иксĕмĕре ваљљи кĕрĕкпе тăлăп та çĕлетес çукчĕ-çке.

# КАШКĂРНЕ ЧĔРĔЛЕХ ТЫТРĂМ, АНЧАХ СЫЛТАМ АЛЛĂМ АМАНЧĔ

Йамаш вăрманĕнчи пăсарасене пĕр каçрах тытса тавăрăннă хыççăн, мана хамăр йалти çынсем çеç мар, таврари пĕтĕм халăх чаплă та паллă сунарçă вырăнне шутлама пуçларĕ. Çакăн хыççăн халиччен чаплă сунарçăсем те ман пата пырса çав тери нумай пăсара мĕнле майпа тытни çинчен каласа пама йăлăнатчĕç.

Сунарçăсем кăна мар, ман пата йалти ача-пăчасем те пыратчĕç, вĕсем те епĕ пилĕк лав пăсара мĕнле тытма пултарнине пĕлесшĕнччĕ.

Тӳрех каламала, пирĕн йалти ачасем пĕрре те суйеçĕ сунарçăсем пек мар, вĕсем пурте питĕ тӳрĕ çын пулса çитĕнме тăрăшаççĕ. Çавăнпа епĕ вĕсене пит йурататтăм, пăсара тытни çинчен çеç мар, ытти тискер кайăксене йепле тытни çинчен те каласа параттăм. Вĕсем епĕ каланисене питех тимлĕн итлесе ларатчĕç, ӳссе çитсенех ман пек чаплă та паллă сунарçă пулма ĕмĕтленетчĕç.

Пĕрре çапла, ман пата ачасем пӳрт туллийех пухăнчĕç, хама йĕри-тавра сырса илчĕç те пĕрин хыççăн тепри ыйтса тĕпчеме пуçларĕç.

— Çтаппан пичче! Çанăн аллу ăçта аманнă? — тесе ыйтрĕ пĕр ачи, манăн сылтăм алă çинчи мăйăр пысăккĕш

аманнă вырăна кăтартса. Ун хыççăн ыттисем те мана йăлăнма пикенчĕç:

— Çтаппан пичче, каласа парсам ĕнтĕ, санăн аллу ăçта аманнă? — теççĕ çак ачасем.

— Хăвăрах пĕлетĕр, епĕ мăн кăмăллă çын мар. Питех итлес тетĕр пулсан, каласа пама пултаратăп, анчах унăн хăйĕн историйĕ пур, — тетĕп.

— Апла пулсан, çав историрен пуçласа каласа парăр, — теççĕ вĕсем.

— Чăнласах итлес тетĕр пулсан, каласа парăп, анчах есĕр ывăнса çывăрса каймăр-и? — тетĕп çаксене.

— Çук, çук, Çтаппан пичче, çывăрмастпăр, — теççĕ вĕсем.

— Çтаппан пичче, питех вăрăм-и вăл истори? — тесе ыйтрĕ тепĕр ачи.

— Калама çук вăрăм, ачасем. Çип пек тăсса кайсан уйăх патнех çитет, çăмхалас пулсан, хуран пысăкĕш çăмха пулать, перчетке çыхас пулсан — пĕр пӳрнескине те çыхма çитмест, каласа парас пулсан — пĕр уйăхах тăсăлать, — тетĕп.

— Вăрăм пулсан та каласа пар, çывăрмастпăр, — теççĕ ачасем.

— Шантарсах калатăр пулин те малтан сире çакна асăрхаттаратăп: пĕр уйăх итлесе ларнă хыççăн выçă вилсен, уншăн вара мана ан айăплăр, — терĕм.

— Çук, çук, Çтаппан пичче! Выçă та вилместпĕр, вилсен те сана айăпламастпăр, — теççĕ вĕсем.

— Пурте пĕлетĕр, манăн карчăк пур. Колхоза кĕриччен питех никресчĕ вăл. У-у-х мĕн тери тарăхтарман-ши вăл мана! Епĕ тунă ĕçе йаланах тиркетчĕ, пĕр ĕç çинчен уйăхшар мăкăртатса çӳретчĕ...

— Вăл çапса амантри мĕн аллуна?—тесе ыйтрĕ пĕр ачи часрах пĕлесшĕн пулса.

— Çук, ачам. Манăн карчăк вăл йенчен пит аван, хĕрĕх çул пурăнса та вăл мана пӳрнепе тĕксе курман,— тетĕп.

— Мĕн пулнă-ха тата санăн аллуна?—тесе харăссăн ыйтрĕç ачасем.

—Çавăн историйĕ çинчен калатăп та. Вăл çав карчăкпа кĕвенте пирки пуçланса кайрĕ. Пĕрре вăл пысăк витресемпе шыв ăсма кайнă та кĕвентене вăтаранах хуçса таврăннă.

— Çтаппан, хуçăлман кĕвенте илсе пар-ха? тесе минретме тытăнчĕ карчăк.

Вăл мăкăртатса çӳренинчен йăлтах аптăраса çитрĕм, йурийех Тунти пасарне кайса çĕнĕ кĕвенте илсе патăм карчăка.

— Карчăк, текех ан хуç кĕвентене,— терĕм.

Манăн карчăк кĕвентене çавăркаласа пăхрĕ те айăпне часах тупрĕ.

— Куçусем тепĕр пасара каймарĕç пулĕ-çке кĕвенте илнĕ чух!—тесе йалтаçса илчĕ те çĕнĕ кĕвенте варринчен хуçăлма пуçланине кăтартса пачĕ.

Тытса пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм. Пасарта илнĕ чух чип-чиперехчĕ, киле çитнĕ çĕре хуçăлма та пуçланă иккен. Çав хушăрах хам: Çĕрпӳ пасарнех каймала çав кĕвенте илме, вăл пасарти кĕвентесене кĕнеке çинче те ырласа çырнăччĕ,— тетĕп.

— Ну, карчăк, ан йатла. Çитес шăматкун иксĕмĕр Çĕрпӳ пасарне кайăпăр та хăвна мĕнли килĕшет, çавна суйласа илĕн,— тетĕп.

Манăн карчăк савăнсах кайрĕ.

Анчах шăмат кун çитесси икĕ кун çеç тăрса йулнă пулин те, аран-аран кĕтсе илтĕмĕр Çĕрпÿ пасарне.

Çĕрпÿ пирĕнтен инçе — вунсакăр километр. Çитменнине тата хĕлĕн кунĕ те кĕске. Çавăнпа епĕр пасара тул çутăличченех тухса кайрăмăр.

Вăл кун чăтма çук сивĕччĕ. Манăн çуна тупанĕсем колхозри лодăрсем пек йурласа пыраççĕ. Пĕр ултă километр çеç кайрăмăр, лаша хар-р-т! туса илчĕ те тап чарăнчĕ.

— Мĕн пулчĕ-ши капла? тесе тăлăп çухави ăшне чиксе пытарнă пуçа кăларса пăхрăм. Манăн лаша умĕнче пĕр выçă кашкăр лара парать. Хăй çăварне карса пăрахнă та лашана кăна мар, хама та тăлăпĕ-мĕнĕпех хыпса çăтса йарасшăн.

— Пăрăн, çул пар! — тесе кăшкăратăп кашкăра. Анчах вăл мана илтсен те илтмĕш пулса, хăй вырăнĕнчен хăнк та сикмест.

Хăвăрах пĕлетĕр, епĕ кашкăрсене пайтах тытнă, çавăнпа вĕсенчен пĕртте хăрамастăмччĕ. Анчах çак кашкăртан пит хăрарăм вара. Вăл çăварне татах хытă карса пăрахрĕ те ман паталах пыма пуçларĕ. Пĕччен нимĕн тума аптăранипе йунашар ларакан карчăка чавсинчен туртса систертĕм.

— Карчăк, — тетĕп çакна. — Пирĕн умра выçă кашкăр ларать. Çăварне хам кĕрсе кайам-и йе сана пăрахса парам? — тетĕп.

Манăн карчăк хăранипе шартах сикрĕ. Халиччен кашкăр курманскер, куççулĕпех йĕме пуçларĕ.

— Çтаппан, ху та ан кĕр, мана та пăрахса ан пар, — тет карчăк.

Епĕ кашкăр тĕл пулассине пĕлмен. Кăна пĕлнĕ пулсан икĕ çăварлă пăшала çуна çине хурсах тухмалаччĕ мĕн, вара



Епĕ, çанна тавăрмасăрах, сылтăм алла кашкăр çăварне чиксе лартрăм.

кашкăра пĕр çăварĕнчен пенипех вĕлерсе илсе кайаттăм.

Анчах çакăн пек инкек пулсан, манăн пуçа калама çук ăслă шухăшсем пырса кĕреççĕ. Епĕ текех кăшкăрса та тăмарăм, çуна çинчен антăм та тӳрех кашкăр патнеле утрăм, хӳринчен çавăрса тытса çуна çумне çапса вĕлерес терĕм. Патнех пырса тăтăм, кашкăр çаплах манран хăрамаст. Каккуй хăрама, çăварне карса пăрахрĕ те хам патах сиксе ларчĕ, хăй татах хăрушланса кайрĕ.

Епĕ текех хăрамарăм, кашкăр патнех пытăм та, унăн карса пăрахнă çăварĕ ăшнеле пăхрăм. Çăварĕ калама çук пысăк. Унта епĕ кăна мар, хамăн аллăм та, тăлăп çаннине тавăрмасăрах, кĕрсе каймала.

„Ара, кăна мăшкăлама парас мар-ха, сылтăм алла çăварне чиксе йарам та чĕлхинчен çавăрса тытам“, терĕм. Манăн ăслă пуç кунта та хама улталамарĕ. Епĕ, çанна тавăрмасăрах, сылтăм алла кашкăр çăварне чиксе лартрăм, пĕр самантрах унăн чĕлхине ывăç тавра çавăрса йарса тытрăм. Вăл кашкăр, иккен, çĕрĕпе выçă ӳлесе çӳренĕ, çавăнпа чĕлхи те типсех кайнă пулнă. Вăл маншăн калама çук аван пулчĕ, мĕншĕн тесен унăн типсе кайнă чĕлхине çавăрса тытма та меллĕ пулчĕ.

— Çтаппан пичче, санăн аллуна кашкăр çыртса амантри мĕн? — тесе тĕлĕнсе ыйтрĕ пĕр ачи çакăн хыççăн.

— Çук. Вăл манăн алла çыртма пултараймарĕ. Ара, епĕ тăлăп çаннине тавăрман вĕт-ха, манăн тăлăпĕ питĕ хулăн, ăна кашкăр шăлĕ мар, упа шăлĕ те шăтарас çук, — тетĕп çаксене.

— Апла пулсан, ăçта аманнă-ха санăн сылтăм аллу? — тесе ыйтрĕç вĕсем пĕр харăс.

Епĕ вĕсене: хамăн ал аманнин историйĕ тин çеç пуçланат-ха, терĕм те сăмаха каллех малала калама пуçларăм.

Çапла пулин те ачасем ывăннă темерĕç, манăн сăмаха тата тимлĕрех итлеме пуçларĕç.

Çапла епĕ кашкăр чĕлхине ывăç тавра çавăрса тытрăм та алла шалран-шала чиксе пытăм. Манăн кашкăр вилнĕ пекех кăвакарса çитрĕ, урисемпе те тапкаланайми пулчĕ. Çĕрпĕве çитиччен ывăнĕ тесе кашкăра çуна çине хампа йунашарах лартрăм.

— Çтáппан, пĕтрĕн вĕт! — тет карчăк хăраса ӳксе. — Пăх-ха, аллуна пĕтĕмпех хыпса йанă, чăлах пулса йултăн вĕт, — тет карчăк.

— Карчăк, ан кулҍан, тетĕп. Ыр, кашкăрĕ питĕ усалли пулмарĕ, хама пĕтĕмпех хыпса йамарĕ, тетĕп.

— Чăлах пулса йулатăн-çке, Çтаппан! Хам та ватăлса çитетĕп... Мĕнле пурăнăпăр вара? — тесе кулҍанма пуçларĕ карчăк.

— Кулҍанма кирлĕ мар карчáк. Алла татсах илнĕ пулсан, Çĕрпӳри пулҍницăна кĕрсе çĕнĕ алă ларттарса тухатпăр. Халĕ вĕт тухтăрсем ăсталансах çитрĕç — пĕр алли татăлсан, ун вырăнне пĕр самантрах тепĕр алă лартса йараççĕ, тесе йăпататăп карчăка.

Çакна илтсен, манăн карчăк савăнсах кайрĕ, Çĕрпĕве часрах çитес тесе лашана хытăрах хăвалама пуçларĕ. Епĕ кашкăр çине пăхса пыратăп. Вăл куçĕсене ӳпнеле çавăрса пăрахнă та çăварĕнчен шап-шур кăпăк кăларса пырат. Вилсе кай-и ку хăйамат, тетĕп. Кашкăрне хĕрхенсе алла пăртак кăларма та шутлатăп, анчах вăл хама майран пăвса илесрен хăратăп, мĕншĕн тесен кашкăрсем пит усал, вĕсем хăйсене хĕрхеннине те пĕлмеççĕ. Вĕсене çуна çине лартсан та хăйсем, май пулсан, пăвса антарма хатĕр, вара хăвăн çуну çинчех кашкăр мăшкăлĕ пулса вилетĕн.

Çакна асра тытса епĕ алла чĕрне хури тăрăшшĕ те кă-

лармарăм. Манăн кашкăр, хăйне сывлама питĕ хĕн пулин те, вилмерĕ. Каккуй вилме унта, пасара пыракан çынсене курнипе куçĕсемпе çисе йарас пек пăхма пуçларĕ. Май пулсан, çавăнтах хыпса çăтса йарĕччĕ.

Çĕрпĕве лăпах тул çутăлнă çĕре çитрĕмĕр. Вăл кун уйар пулнипе пасар ирех пухăнса çитнĕ, таçтанах сарăлса выртать.

Лапшу Çтаппанĕнчен пĕтĕм таврари халăх тĕлĕнтĕр тесе, арăма пасар варрипе тухса кайма хушрăм. Пасар хĕрне çеç çитрĕмĕр, пасарти халăх самантрах икĕ йеннеле сирĕлсе тăчĕ -- мана тухса каймашкăн сарлака та такăр çул пулса тăчĕ. Вăл çулпа вара лаша та савăнса çăмăллăн утрĕ.

Халăх манран пĕççисене çапсах тĕлĕнчĕ, çав хушăрах паттăртараххисем çуна патне пырса: — Йепле тытма пултартăн ку кашкăра чĕрĕлех? — тесе тĕлĕнсе ыйтаççĕ.

— Тĕлĕнмели нимĕн те çук унта. Кашкăрсем те, упасем пекех, пыл çиме йуратаççĕ вĕт. Кашкăра чĕрĕлех тытас тетĕр пулсан, аллусене пыл сĕрĕр те хире çеç тухса выртăр, выçă кашкăр пырсанах пыл сĕрнĕ аллуна хыпса ĕмме пуçлĕ, вара есĕр чĕлхинчен кăна çавăрса тытăр, тетĕп.

— Пултаратăн çав есĕ Лапшу Çтаппанĕ! — тесе тĕлĕнсе йулчĕ пасарти халăх.

Пасар витĕр тухсанах епĕ сунарçăсен кантурне пырса кĕтĕм. Çав вăхăтра пирĕн кантурта председател пĕр пĕччен ларатчĕ. Вăл манăн алăри чĕрĕ кашкăра курсанах месерле шанк! кайса ӳкрĕ.

— Хăрама кирлĕ мар, Кирил Вунихватĕвич, — тетĕп çакна. Кирил Вунихватĕвич ури çине тăчĕ те мана чĕтречĕтрех çапла йатлаçма пуçларĕ:

— Çтаппан Петровчă! Мĕншĕн-ха чĕрĕлех тытса килтĕн? Кам вĕлерĕ санăн кашкăрна?

Çав самантра пирĕн кантур умĕпе пăшалне çакса пĕр сунарçă иртсе пырат. Кирил Вунихватĕвич курах кайрĕ çакна, ăна кантуртанах чĕнсе кĕртрĕ.

— Халех, хам куç умĕнчех персе вĕлер çак кашкăра! — тесе вăл манăн алри чĕрĕ кашкăр çине тĕллесе кăтартрĕ.

Лешĕ вара ăна-кăна та шутламарĕ пулас, пăшалĕпе кашкăр хырăмĕнчен тĕллерĕ те пан! тутарчĕ.

Манăн алла çăтăр! тутарса хытă чĕпĕтсе илнĕ пек туйăнчĕ. Епĕ самантрах алла туртса кăлартăм — алăран йун палкаса йухат. Тинех пĕлтĕм: кашкăра хырăмĕнчен тĕллесе пенĕ пуљă унăн çăварне чиксе йанă ал витĕрех тухса кайнă мĕн.

Акă ăçта аманчĕ манăн сылтăм аллăм, тесе пĕтертĕм епĕ хамăн халлапа. Ачасем ăна питех йуратса итлерĕç, ман пата татах халлапсем итлеме килетпĕр, терĕç.

## ПĔР УПАШĂНАХ ВИÇĔ ТАЛĂК ЙĂВĂÇ ТĂРРИНЧЕ ÇЫВĂРТĂМ

Ĕлĕкхи вăхăтра пирĕн таврара упасем пит нумай пулнă. Йамаш вăрманне кайсан, вĕсене унта кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпех курма пулатчĕ.

Çапла епĕ хамăн ĕмĕрте пайтах упа тытса куртăм. Пирвайхи упана хам вунпилĕк çулта чухнех тытрăм. Вăл упа калама çук пысăкчĕ, унăн какайĕ те лăпах вуникĕ пăт туртрĕ, ăна вара хĕл каçичченех çисе пурăнтăм.

Çакăн хыççăн епĕ упасене кăна тытма пуçларăм. Çулсерен вăтăршар упаран кайа мар тытакан пултăм, виçтăватă çултах пур упасене те тытса пĕтертĕм. Унтанпа пирĕн йал çĕрĕ çине мар, Йамаш вăрманне те нихăçан та упа ури пусса курман.

Йулашки упана епĕ Çĕпĕрте — тайгара тытрăм. Вăл акă йепле пулчĕ.

Манăн аслă ывăл Çĕпĕрте, тайга варринчи йалта, учителте пурăнатчĕ. Темиçе çул хушши вăл мана хăй патне пырса курма чĕнсе çырусем йачĕ. Кĕрхи ĕççене туса пĕтертĕм те ывăл патне тухса кайрăм. Унта куйан, тилĕ, кашкăр, упа нумаййине малтанах пĕлсе, епĕ хампа пĕрле икĕ çăварлă пăшал, пĕр михĕ тар, икĕ пăта йахăнах вĕтĕ пуҁкă тата йуратнă йыттăма — Шашкăна илсе кайрăм.

Пуйăспа тăватă кун кайнă хыççăн, пиллĕкĕмĕш кунне ывăл патне çитрĕм. Пĕр кун пурăнатăп, иккĕ... виççĕмĕш кунĕнче манăн сунара пит кайас килекен пулчĕ.

— Атте,—тет ывăл.—Асту, ку тайга пит пысăк, инçе-
теле кайса ан çухал,—тет.

— Темĕн пек пысăк пулсан та пĕр кунта çаврăнса тухатăп,—тетĕп.

Вĕтĕ пуљкăпа авăрланă икĕ çаварлă пăшала çакрăм, пиçиххи хушшине пĕчĕк пуртă хĕстертĕм, Шашкăна йертсе тайгана тухса утрăм.

Есĕр тайга мĕнлине пĕлместĕр пулĕ-ха. Çавăнпа сире вăл мĕнли çинчен те каласа парам. Тайга калама çук пысăк вăрман, унăн вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Унта темĕн тĕрлĕ йăвăç ўсет, вĕсен турачĕсем пит çăра: çўлеле пăхсан, пĕлĕт татăкĕ те курăнмасть. Унтах асар-писер хăрушă çырмасемпе каçса кайайми шурлăхсем пур.

Нумайах та каймарăм, епĕ çавнашкал çырма хĕрринех пырса тухрăм. Айалала пăхрăм—çырма тĕпĕ те курăнмасть. Татах тинкерсе пăхрăм—манран çич-сакăр утăмра кăна пысăк упа лара парать. Хăй çилпе хуçăлса аннă йăвăç тункати çумне тăнă та темĕскер аппаланать. Мĕн хăтланать-ши ку?—тесе тата тинкçререх пăхрăм. Упа иккен йăвăç чĕлпĕкĕсене хăй йеннеле туртса илет те сасартăк калла йарать—йăвăç чĕлпĕкĕсем тăмра хĕлĕхĕсем пек йанраса калла пырса çапăнаççĕ.

Ак тамаша, тетĕп. Упасен те ăсĕ пур мĕн, çынçем пекех музыкă итлеме йуратаççĕ, тесе тĕлĕнсе тăратăп. Путех ку чи ăслă упа пулĕ, тесе ăна епĕ пăшалпа та пеме шутламарăм, лартăр савăнса, терĕм те малала утма шутларăм.

— Хам, хам, хам!—илтĕнсе кайрĕ Шашкă сасси. Епĕ хыçалала çаврăнса пăхрăм. Манăн Шашкă чĕрĕп тупнă та ура тапса вĕрсе тăрать. Чарăн, тесе Шашкăна пўрнепе йунатăп. Шашкă мана пĕрре те ăнланмасть, çаплах çиксе вĕрет чĕрĕпе.

„Мĕншĕн илсе тухрăм-ха кăна, упа курса мана хăй айнех пĕтĕрсе чикет",—тетĕп. Чăнах та, Шашкă сассине илтсе, упа мана курчĕ, çиленсе пăхрĕ те урисемпе йунама пуçларĕ.

„Мĕн тăвас ку упана?"—тетĕп. Пăшалпа перес—çав тери ăслă упана вĕлерме те шел, вĕлерсен те киле çĕклесе çитерейменĕп, тетĕп. Çапах та упана çаплипех хăварас килмерĕ—вĕлермех шутларăм. Пĕрре пенипех вилмĕ тесе тата тем пулĕ те тем килĕ тесе пиçиххи хушшинчи пурта кăлартăм.

„Ăçтан перес-ха кăна" тетĕп. Шутласа тăтăм-тăтăм та чĕринчен тĕллесе хаплаттартăм. Манăн упа ача пек çухăрса йачĕ те хам патала хăпарма пуçларĕ. Хăранипе сехрем хăпса тухатчĕ. „Ăçта кĕрсе кайас ку хăйаматран, тетĕп. Шашках пĕтерчĕ, вăл пулман пулсан упа та курмастчĕ, мĕншĕн Шашкăна илсе тухрăм", тесе куљанатăп.

Шашки тата мана пăрахса хăварсах таçта тарса пытанчĕ. Вăт йепле телейлĕ вăл. Ура тăваттă мар, тăваттă пулсан, епĕ те сан пекех тараттăмччĕ, тепĕр çăварĕнчен персе упине те вĕлереттĕмчĕ, тетĕп.

Çапла шутласа тăнă вăхăтра упа ман пата çывхарса çитме пуçланă, хамăр колхоз вăкăрĕ пекех çĕмĕрсе хăпарат. Тепĕр минут тăнă пулсан, упа мана çавăнтах хăй айне тĕркелесе чикнĕ пулĕччĕ—йурат манăн пуç хытă ĕçлет.

Ман çумрах çӳллĕ йăвăç ларат. Епĕ пĕр самантрах çав йăвăç тăрне хăпарса лартăм. Унччен те пулмарĕ, упа та йăвăç патне çитсе тăчĕ, мана татах çиленчĕ пулас—каллех урисемпе йунама пуçларĕ.

„Хаљ ĕнтĕ тытаймастăн мана,"—тетĕп çакна. Çав вăхăтрах хам пĕр турачĕ çине лайăх майланса лартăм та упана чĕри тĕлĕнчен тĕллесе иккĕмĕш çăварĕнчен кĕрĕсл еттертĕм.



Шашкă çавăнтах пулнă иккен. Вăл хăр-р! тесе упан кĕске хӳринчен çыртса илчĕ.

Упа çапах та вилмерĕ, мана татах çиленсе çитрĕ, йăвăçа ыталаса илчĕ те çын пекех хăвăрт хăпарма пуçларĕ. Епĕ хăрасах кайрăм, нимĕн тума аптăранипе:

— Шашкă! Шашкă!—тесе кăшкăрса йатăм.

Шашкă çавăнтах пулнă иккен. Вăл, хăр-р! тесе упан кĕске хўринчен çыртса илчĕ.

Уркенчĕк упа мĕшĕлтетсе калла çаврăнса пăхрĕ, манăн Шашкăна курах кайрĕ хăйамат. Вăл ман пата хăпарма пăрахсах Шашкăна хăвалама пуçларĕ.

Шашкă калама çук хытă чупать, ăна упа мар, куйан та хăваласа çитес çук. Упа ытла инçех каймарĕ, каллех ман пата хăпарма пуçларĕ.

— Шашкă! Шашкă!!!—тесе кăшкăртăм йытта иккĕмĕш хут.

Вăл чупса çитрĕ те упана татах хўринчен йарса илчĕ, ура тапса калла туртма пуçларĕ. Упа хўри хытах ыратрĕ пулас: вăл ман пата хăпармасăрах Шашкăна таçта çитийех хăваласа кайрĕ.

Епĕ çав вăхăтра çĕре анса малтан манса хăварнă пуртта илтĕм, хам çинçерех йăвăç çине хăпарса лартăм, хăпарнă май йăвăçăн пур туратне те иртсе пытăм.

Анчах упа каллех çаврăнса çитрĕ. Вăл тўрех епĕ малтан хăпарса ларнă йăвăç патне пычĕ, мана пăхма пуçларĕ. Епĕ тепĕр йăвăç çинче ларнине курах кайрĕ. Тарăхса çитнипе каллех ман пата хăпарма пуçларĕ — йăвăçăн турачĕсене иртнĕ пулсан та çынран та аван хăпарать.

Епĕ нимĕн тума аптăранипе виççĕмĕш хут Шашкăна чĕнтĕм. Вăл кăлтăрмач пекех кусса çитрĕ те упана татах хўринчен çыртса илчĕ.

Анчах упа калла анмарĕ, ман патах хăпарма пуçларĕ.

Пĕччен мар, хăйĕн хўринчен çакăннă Шашкăва та хăйпе пĕрлех çĕклесе хăпарать.

Епĕ тĕлĕнсех кайрăм. Упасем пĕрре те епĕ шутланă пек мар иккен. Вĕсем калама çук вăйлă: вĕсем манăн Шашкăна та йăвăç тăрне çĕклесе хăпарма пултараççĕ иккен.

Хăвăрах пĕлетĕр, епĕ ун пек инкек килсен, аптăраса тăмастăп. Пуртта илтĕм те хам патах хăпарса çитнĕ упан малти урине лач лартрăм. Ури татăлса çĕре ўкрĕ. Унăн хыççăн упи хăй те çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ, манăн Шашкă кăшт çеç упа айне пулса вилетчĕ — аран-аран пĕр йеннеле пăрăнса йулчĕ.

Çакăн хыççăн упа, мана тарăхса çитнипе, епĕ хăпарса ларнă йăвăça кăклама пуçларĕ. Виççĕ чавать те пĕр тымарне туртса кăларать, татах виççĕ чавать те тепĕр тымарне туртса кăларать.

„Мĕн тăвас кунпала", тетĕп. Çав самантрах пăшала икĕ çăварне те авăрласа умлăн-хыçлăн упа тутине тĕллесе петĕм. Упа тутинчен пур йеннеле те йун сирпĕнме пуçларĕ, çывăхран пăхса ларакан Шашкăна хĕп-хĕрлĕ йун турĕ. Татах икĕ çăварне те авăрласа каллех тутинчен тĕллесе перетĕп. Йулашкинчен упа ача пекех йĕме пуçларĕ.

„Е-е-е, тетĕп. Сана тутаран пемеле пулнă. Кăна пĕлнĕ пулсан, малтан тытнă упасене те тутаранах персе тытмалаччĕ иккен, тесе ларатăп.

Анчах манăн савăнни ахалех пулчĕ. Тутинчи йунне çуласа тасатрĕ те упа татах йăвăça кăклама пуçларĕ. Кăклать-кăклать те йăвăça çапса пăхать, манăн йăвăç хăрах йеннеле сулăнса кайрĕ.

„Тинех упа мăшкăлĕ пулса вилме тўр килчĕ", тетĕп. Алсем чĕтреме пуçларĕç, пăшала та авăрлаймастăп. Нимĕн



Ман пата пынă сунарçă хам ывăл вĕрентекен Ӥалтанах пулнă.

тума аптăранă йенне Шашкăна чĕнсе пăхатăп. Анчах ап-ла та усси çук, Шашкăна çыртмашкăн упан хӳри те тăрса йулман. Шашкă та, ман пекех хăраса, упа патне пыма шикленет.

Çапла пулсан та пăшала икĕ çăварне те авăрласа упана умлăн-хыçлăн тепре петĕм. Упа месерле кайса ӳкрĕ. Епĕ савăнсах çитрĕм те татах упана перетĕп. Ма-нăн упа хускалма та чарăнчĕ. Çапах хам йăвăç çинчен анма хăратăп. Мана ĕлĕк хамăр йалти ват сунарçă — Кăт-ра Карачăм çапла каласа панăччĕ:

— Çтаппан шăллăм! Асту, упасем кутăнланма йура-таççĕ те... сывăха пырсанах пусса ӳкереççĕ,—тенĕччĕ.

Çакна аса илсе епĕ те йăвăç çинчен анмарăм. Питех йăхă килнипе йăвăçĕ çумне сыхăнса ларсах сывăртăм.

Çапла епĕ темиçе кун сывăрнă (ăна хам та пĕлмес-тĕп) пĕр ирпе вăранах кайрăм. Упа пĕр хускалмасăр выр-тат, хам çапах çĕре анма хăратăп.

„Ниушлĕ çын тавраш̆ĕ çӳремест кунта“, тетĕп. Пулă-шу ыйтса кăшкăрма пуçларăм. Инçетрен пăшал пенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ. Епĕ те пăшалпа персе хам ăçтине пĕлтер-тĕм. Вăхăт нумай та иртмерĕ, ман телейе, пĕр сунарçă çитсе тăчĕ.

— Сыхлан!—тетĕп. Асту, патне ан пыр! Упасем йу-рийех виленçи пулса выртаççĕ,—тетĕп.

Çак сунарçă пăшалне тытрĕ те упана тĕллесе хаплат-тарчĕ. Манăн упа мĕшĕлт те тумарĕ. Пăхрăм та тĕлĕнме-ле йапала куртăм. Манăн Шашкă, шăнасран пулас, упа хăлхи ăшне кĕрсе сывăрнă та, пăшал сассине илтсенех сиксе тухса, çак сунарçă патнеле чупса кайрĕ.

„Ку чăнласах вилнĕ мĕн“, тесе йăвăç çинчен антăм. Хам витĕр шăнса кайнă, урасем пĕр-пĕринчен иртсе çĕре

пусаймаççĕ. Аран-аран уткаласа пытăм та упана çамкинчен пуртă тăршшипе çапса пăхрăм. Упа чăнласах вилнĕ иккен, пуртă тăршшипе çапсан та мĕшĕлт те сикмерĕ.

„Итле ĕнтĕ çав Кăтра Карачăма, тетĕп. Хăй йалта чи вачă сунарçă тесе мухтанатчĕ, упана мĕнле тытмалине те пĕлмест иккен, пулаççĕ çав тĕнчере суйеç сунарçăсем“, тетĕп.

Ман пата пынă сунарçă хам ывăл вĕрентекен йалтанах пулнă. Вăл мана çакăн пек тĕлĕнмеле хыпар каласа пачĕ

— Сана ывăлу тайгара аташса çӳрет йе упасем тытса вĕлерчĕç пулĕ, тесе шутлат. Есĕ тухса кайнăранпа лăпах виçĕ кун иртрĕ, есĕ таврăнманнине кура йалти пур сунарçăсем те сана шырама тухрăмăр,—тет.

Çакна илтсен, епĕ тĕлĕнсех кайрăм. Виçĕ çĕрте виçĕ кун йăвăç çинче çыхăнса çыврнă иккен. Капла манăн хырăм та выçса кайнă пулĕ, тетĕп. Хырăма тытса пăхрăм та манăн хырăм пуш-пушах тăрса йулнă.

Витĕр шăннипе кăшт çеç вилсе кайаттăм. Ыр, Шашкăна илсе тухрăм. Ăна илсе тухман пулсан, упине те тытас çукчĕ. Çав упан какайĕпе çуне çинипе çеç шăнса пăсăласран хăтăлса йултăм.

## ÇĂКА ХĂВĂЛĔНЧЕ ЛАРСАХ АРĂСЛАНА ЧĔРĔЛЕ ТЫТРĂМ

Есĕр пĕри те арăслан курман. Вăл мĕнлине есĕр кĕнекесем тăрăх çеç пĕлетĕр. Анчах арăслансене кĕнекесем çинче питĕ пĕчĕккĕ туса ӳкереççĕ. Чăннипе вĕсем калама çук пысăк тата пит те вăйлă. Арăслан икĕ çулти вăкăра çурăмĕ çине çавăрса хурсах çӳлĕ хӳме урлă сиксе каçма пултарат теççĕ. Çавăн пек вăйлă пулсан та, епĕ ăна тытса курнă.

Хăвăрах пĕлетĕр, пирĕн таврара арăслансем çук. Вĕсем ăшă йенче çеç пурăнаççĕ. Çавăнпа есĕр манран:— Çтаппан пичче, есĕ арăслана ăшă йенне кайса тытрăн-и? —тесе те ыйтма пултаратăр.

Епĕ ун пек çĕре кайма та шутламан. Çавнашкалах пуçра та арăслан тытас шухăш пулман. Çапах та епĕ ăна тытса куртăм, вăл акă мĕнле пулчĕ.

Пĕр çулхине пирĕн йал çыннисем рашчара касса çуракан катка хăмисене станца турттарса тăма Пахчал йалĕнчи Уртиван Куçмич патне тара кĕрĕшрĕç. Пĕрре манăн кӳршĕ лашине илсе пĕччен икĕ лавпа катка хăми тийесе каймала пулчĕ. Станца çитсе лавсене пушатрăм, лашасене утă парса хам апатланма лартăм. Унччен те пулмарĕ, пĕтĕм халăх тин çеç çитсе чарăннă пуйăс патнеле чупрĕ. Мĕн пулнă-ши? тесе епĕ те вĕсем хыççăн кайрăм.

Пĕр вакунĕ çинче, тимĕртен тунă пысăк читлĕхре калама çук пысăк арăслан ларать. Хăй çилхине пĕр тăратса, пĕр вырттарса калла-малла утса çӳрет, шăлĕсене йерсе пирĕн çине çисе йарас пек пăхать.

Епĕ тĕлĕнсех кайрăм. Малтанах манăн пуçа çакăн пек шухăш пырса кĕчĕ:—Мĕнле сунарçă тытма пултарнă-ши ăна чĕрĕлех?.. Пĕр йенчен, тĕнчере ун пек сунарçă çук пек туйăнчĕ. Тепĕр йенчен, çак арăслан пĕрре те тимĕр читлĕх ăшне хăй ирĕккĕн кĕрсе ларас çук. Паллах, ăна сунарçах тытнă. Анчах ăçта тата мĕн йатлă сунарçă тытнă-ши ăна?

Манăн хамăн та çавăн пек сунарçă пулса арăслансене чĕрĕлех тытас килчĕ. Анчах пирĕн патра арăслансем çук, акă мĕн пăшăрхантарать мана.

Çапла шутласа тăнă вăхăтра вакун патне иккĕн икĕ пăта йахăн какай йăтса пычĕç.

— Çакăн чухлех çийет-и вара?—тесе тĕлĕнсе ыйтрĕç сынсем.

— Кунсерен икшер пăт çийет,—тет какай йăтса пынисенчен пĕри.

Вăл самантрах пĕр вĕçне ункăлă тунă турчка пек вăрăм тимĕр илсе, читлĕхри арăслана тепĕр пуçнеле хăвалама пуçларĕ. Анчах арăслан хăй вырăнĕнчен йахăнне те тапранасшăн мар, вăл хăйĕн хӳрипе тимĕр вĕçĕнчи ункăран тирсе илчĕ те çынна хăй патнеле туртма пуçларĕ.

Çакна курсан, çынсем хăрасах кайрĕç. Вĕсем пурте, çынна пулăшас тесе, тимĕртен тытса арăслана кайала туртма тытăнчĕç. Арăслан çапах та вырăнтан тапранмасть, тимĕртен тытсан та хăй вырăнĕнче çапса лартнă вĕрен пăти пек çирĕп тăрать.

Çапла аппаланса тănипе хамăр та сисмен, пуйăсăн тапранса каймали вăхăчĕ те çывхарсах çитрĕ. Какай пама пынă çынсем пит тарăхрĕç. Пĕри турчка пек тимĕрне пăрахрĕ те, читлĕх алăкне уçса какайне пăрахса пама тăчĕ. Арăслан çав самантрах алăкне йарса тытрĕ. Çынем хăра нипе шăй-шай кăшкăрашса илчĕç те пуртэ çĕре лăпчăнса ларчĕç. Çав самантра читлĕхри арăслан таçта тухса тарнă, вакун çинче пуш читлĕх кăна тăрса йулчĕ.

Вăл кун станцăра пасарччĕ. Читлĕхрен арăслан тухса тарнине илтсен, пасар пĕр самантрах саланса пĕтрĕ. Арăсланран хăраса кашнийех пĕрер шăтăрнак кăлара-кăлара кайрĕç. Çапла мана ваљљи пĕр шăтăрнак та хăвармарĕç.

Пурне те паллă, епĕ çынсем пек шиклĕ мар. Шиклĕ пулсан та, мĕнех тăвайăн-ха çав шăтăрнакпа? Унпа арăслана мар, пăсарана та çапса вĕлереймĕн. Çапла епĕ, пĕр шăтăрнак илмесĕрех, киле пĕр хуйхă-суйхăсăр çитрĕм.

Çакăн хыççăн икĕ кун та иртмерĕ, арăслан каçсерен вуншар, çирĕмшер сурăх пăвма пуçларĕ. Таврари çынсем сурăхĕсене çеç мар, пĕтĕм выљăхне-чĕрлĕхне йуман витесене, чул нӳхрепсене хупса усрама пуçларĕç. Анчах капла туни те пулăшмасӗ мĕн. Арăслан кайран ĕнесене тапăнма пуçларĕ, вара пĕтĕм халăх пысăк хуйха ӳкрĕ. Йулашкинчен çынсем:—„каплах пулсан, пĕр выљăхсăр тăрса йулăпăр“, тесе хуйхăрма пуçларĕç.

Нимĕн тума та çук, пур йалсенчи сунарçăсем те çак арăслана мĕнле тытасси çинчен канашлама тытăнчĕç. Славаш сунарçисем йалти хĕрарăмсен сӳсне пĕтĕмпех пухса таната йаваççĕ: арăслана танатапа тытатпăр, теççĕ; Мăнçут сунарçисем шартлама сивĕрех уйа тарăн та пысăк шăтăк чавма пуçларĕç. Кунта вăкăр йаратпăр та выçă арăслан

хăйех килсе анса кайаť, теççĕ; Пахчал сунарçисем тата Йамаш вăрманне чĕртсе çунтарса йарасшăн, вара унта пурăнакан арăслан та çунса вилет, теççĕ.

Епĕ халиччен пĕрре те арăслан тытса курман. Çавăн-па-и тен, манăн канашсене пĕр çын та итлемерĕ, сунарçи-сем: „Санран пулаť-и арăслан тытасси, куйансене тытма лайăхрах вĕрен-ха“ тесе кулаťчĕç.

Çапла кулни мана пит те пăшăрхантарчĕ. Манăн йеп-ле пулсан та вĕсене хамăн вăйа кăтартас килчĕ. Вăйĕ ва-ра чăнласах пурччĕ манăн: урасене икшер пăт пуканĕсем çыхса йарса виçшер километр кайаттăм. Çăл куçĕ майлах тапса тăраťчĕ манăн вăй. Вăл вăй пĕр арăслана çеç мар, вунă арăслана та тытма çитĕ-ха, тесе пĕр ирпе тухрăм та утрăм Йамаш вăрманне.

Вăрманта лăпах кăнтăрлаччен утса çӳрерĕм — ниçта та арăслан йĕрне тĕл пулмарăм. Аптăранă йенне, путех ку арăслан епĕ кунта пурăнни çинчен сиссе таçтала тар-нă пулĕ, тесе те шухăшлатăп.

Вăрманта пĕр сас-чĕвĕ те илтĕнменнине кура тата манăн пуç мĕн шутлани тĕрĕсех пулаканччĕ, тесе киле кайма шут тытрăм. Анчах ик-виçĕ утăм та тумарăм, арăс-лан пĕтĕм вармана чĕтретсе уласа йачĕ. Манăн çӳç-пуç виреле тăрса кайрĕ, пуçри çĕлĕк чутах хывăнса ӳкетчĕ.

Пăхатăп, арăслан ман паталах утса килет, читлĕхрен тухса тарнă арăсланах. Епĕ текех хăраса тăмарăм, чĕрин-чен тĕллесе пĕрре пенипех йăвалантарса антарăп, терĕм те пăшала йарса тытрăм, анчах алăсем чĕтренипе пăшал-не те перейменерĕм.

Арăслан, хăйне пеме хатĕрленнине пĕлсе-и тен, та-тах хăрушланса кайрĕ те ман çинех сиксе ӳкрĕ. Çак са-мантра пуç ăслă шухăш шухăшласа кăларман пулсан, арăслан

ури айёнче пашалу пекех лапчăнса йулаттăмччĕ пулĕ: ыр манăн пуç калама çук ăслă шухăш шухăшласа кăларчĕ. Манăн çумрах хăвăл çăка ларат. Епĕ, кайала çавăрăнса пăхмасăрах, çав çăка хăвăлне кĕрсе лартăм. Çав самантрах арăслан та çăка патне çитсе тăчĕ.

Анчах вăл темĕн пек хăтлансан та ман пата кĕреймерĕ. Йулашкинчен, вăл çăка хăвăлĕ ăшне сăмсине чиксе йачĕ. Епĕ текех хăраса тăмарăм, мĕн вăй çитнĕ таран пăшал кучĕпе унăн сăмсинчен çапрăм.

Арăслана хытах ленкрĕ, унăн сăмсинчен кĕрех йун тапса тухрĕ, хăй çапах та мана пăрахса каймаст. Йунне йухтарса пĕтерчĕ те арăслан ман пата кĕме пысăк шăтăк шырама пуçларĕ. Çăка таврала темиçе хут çаврăнса та, вăл хăйне тивĕçлĕ шăтăк тупаймарĕ. Нимĕн тума аптăранă йенне епĕ кĕрсе кайнă шăтăк умне пырса тăчĕ, çăка хăвăлне хӯрине чиксе йачĕ, мана хӯрипе çаклатса туртса кăларас терĕ пулмала.

Анчах епĕ хăраса тăмарăм, арăслан хӯринчен çавăрса тытрăм та питĕ хытă кăшкăрса йатăм. Арăслан хăранипе унтала та кунтала сикме пуçларĕ. Епĕ савăнсах çитрĕм, хытăран та хытă кăшкăрма тытăнтăм. Арăслан, ниçта кайса кĕме пĕлменнипе, пур вăйĕпе сикме пикенчĕ. Çапла вăл епĕ кĕрсе ларнă çăкана хăвăлĕ-мĕнĕпех кăкласа кăларчĕ те мана çăкипе пĕрлех таçтала сĕтĕрсе кайат.

Ара, ку арăслана хамăр йалах илсе кайас, терĕм. Анчах вăл пирĕн йал тĕлне пĕлмест, çавăнпа манăн унпа пит нумай аппаланмала пулчĕ. Малтан епĕ çăка хăвăлĕнче ларсах унăн тăрринчи чи пысăк туратне хуçса илтĕм, унтан çав туратпа çапа-çапах арăслана хамăр йала каймали çула кăтартса пытăм.

Йала лăпах каç пулас умĕн çитрĕм. Анчах йала кĕрес



Вӑрманта ниҫта та ҫакланмасӑр тухнӑ ҫӑка уй хапхи ҫумне ҫакланса ларчӗ.

умĕн пĕр инкек пулчĕ. Вăрманта ниçта та çакланмасăр тухнă çăка уй хапхи çумне çаклансa ларчĕ. Çакланнине вĕçертсе йарас тесе темле те аппаланса пăхрăм, анчах çăкана нийепле те вĕçертеймерĕм. Çапла манăн çăка хăвăлĕнче лăпах тепĕр ирччен кĕтсе выртмала пулчĕ.

Тул çутăлса çитнĕ çĕре уй хапхи патне пĕтĕм йал халăхĕ пухăнчĕ.

— Кам унта çăка хăвăлĕнче?—тесе тĕлĕнсе ыйтаççĕ манран çынсем.

— Епĕ, Лапшу Çтаппанĕ,—тетĕп çаксене.

Йал халăхĕ манран тĕлĕнсех кайрĕ.

— Мĕнле тытрăн та, мĕнле тытрăн ку арăслана?—тесе минретеççĕ çаксем.

Епĕ вĕсене арăслана тытни çинчен каласа памарăм. Хам çáка хăвăлĕнче ларсах вĕсемпе кĕске пуху туса ирттертĕм, вăл пуху предçедателĕ хамах пултăм. Унта епĕр пĕр ыйту—арăслана ăçта хупасси çинчен сӳтсе йаврăмăр. Анчах вăл ыйту пит вăрăма тăсăлчĕ, мĕншĕн тесен кашнийех хăйĕн шухăшĕсене каласа пама тăрăшрĕç. Вĕçкĕн Ваççа пăшалне йатса тухнă та:

—Ниçта та хупма кирлĕ мар, халех персе вĕлеретĕп те Лапшу Çтаппанне те вилĕмрен хăтаратăп,—тет.

— Хăвăн ухмах пуçупа лăпăртатса тăма та намăс,—тесен çеç вăл чарăнса ларчĕ, унпа вара пĕр çын та килĕшмерĕ.

Арăслана ăçта хупмали çинчен хамăнах каласа памала пулчĕ. Самантрах епĕ Хриссан Мĕкĕтин чултан тунă нӳхрепĕ пурри çинчен аса илтĕм, кунта хупнă арăслана кайран тимĕр читлĕх ăшне те кăларма аван пулать, терĕм. Хамăн шухăша каласа патăм.

Ман шухăшпа пурте килĕшрĕç. Çынсем пĕр самантрах

гуртăсемпе пăчкăсем илсе тухрĕç те çакланса ларнă çăкана татса вĕçертсе йачĕç, хăйсем Хриссан Мĕкĕтин нӳхреп çăварне уçса хума чупрĕç.

Нӳхреп патне çитсен ывăннă арăслан савăнсах кайрĕ, тӳрех нӳхрепе сикрĕ. Епĕ унăн хӳрине йатăм та çăка хăвăлĕнчен сиксе тухрăм, нӳхреп çăварне хупса лайăх питĕрсе лартрăм. Çав каçах икĕ çынна станца йатăм, унта вĕсене çапла калама хушрăм:

— Çенер йалĕнчи чаплă сунарçă, Лапшу Çтаппанĕ, виçĕм кун читлĕхрен тухса тарнă арăслана чĕрĕлех тытнă, арăсланне ыранах пырса илсе кайăр! — тесе калăр, терĕм.

Çак арăслана чĕрĕлех тытнă хыççăн мана пĕтĕм тĕнче пĕлсе çитрĕ. Çапла епĕ пĕр арăслан тытнипех тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă пулса тăтăм.

## САККĂР ПЕРСЕХ ПĔР ЛАВ ПĂЧĂР ТЫТРĂМ

Епĕ кунсерен темиçешер çыру илсе тăратăп. Ман пата тĕрлĕ вырăнсенчен тĕрлĕ чĕлхесемпе çырусем йарса, манăн халлапсене пур çĕрте те ватти-вĕттипех кăмăлласа вулани çинчен пĕлтереççĕ. Акă, пайан епĕ Тукаљ йалĕнчи шкулта вĕренекен ачасенчен çакăн пек çыру илтĕм:

> „ХИСЕПЛĔ ÇТАППАН ПИЧЧЕ!
>
> Епĕр сирĕн халлапусене питех йуратса вулатпăр, сире вĕсемшĕн чĕререн тав туса тата нумай пурăнма сывлăх сунатпăр.
>
> Çтаппан пичче! Есĕр тĕнчери чи паллă та чаплă сунарçă, есĕр пайтах тискер кайăк тытнă. Епĕр Сирĕнтен çакна ыйтса пĕлесшĕн:—Есĕр, Çтаппан пичче, кăвакалсем, пăчăрсем тытса курман-и? Тытнă пулсан, вĕсене йепле тытни çинчен те çырăр!
>
> Есĕр пире кăмăл тăвасса шансах тăратпăр.
>
> Сире йуратакан ачасем“.

Чăнахах епĕ кăвакал та, пăчăр та, ăсан та пайтах тытса курнă, вĕсене тытас тĕлĕшпе те епĕ чи чаплă сунарçă шутланнă. Манран хамăр таврари сунарçăсем кăна мар, Çĕпĕрти сунарçăсем те шалтах тĕлĕнетчĕç.

Пурне те паллă, Çĕпĕрте епĕ темиçе хут та пулса курнă. Кашни каймассерен епĕ унти сунарçăсене мĕнпе те

пулсан тĕлĕнтерсе хăвараттăм. Уйрăмăнах, манран унта пăчăрсене ăçта тытнинчен тĕлĕнетчĕç. Çак тĕлĕшпе епĕ хам кăна мар, манăн карчăк та чапа тухрĕ. Анчах вăл хăй тĕллĕн пĕр пăчăр та тытса курман.

Пăчăр тенĕрен, сире вĕсене йепле тытни çинчен каласа парам.

Выçлăх çулхине Çĕпĕре кайса, пĕр çул хушши епĕ тайга хĕрринче ларакан йалта пурăнтăм. Вăл тайгара кедр йăвăççисем чылайччĕ, унтах тата темĕн тĕрлĕ тискер кайăксем те пурăнатчĕç. Кĕркунне пулсан, йал çыннисем лавĕ-лавĕпе кедр майри туртаратчĕç, хĕллехи вăхăтра сунарта çӳресе пакшасем, тилĕсем, упасем тытатчĕç.

Çакна кура кĕркунне çитсен, манăн та кедр майри çийес килчĕ, карчăк та кунсерен кедр майри татса пар, тесе минретме пуçларĕ.

Анчах епĕ халиччен нихçан та кедр майри татса курман. Çавăнпа мăйăр татма карчăка йама шутларăм. Вăл тата мансăр пуçне килтен те тухмастăп, тет. Çапла вара ирĕксĕрех хамăн та каймала пулчĕ.

Пурте пĕлеççĕ, епĕр карчăкпа иксĕмĕр, нумайа хапсăнакан çынсем мар. Çавăнпа епĕр кедр майри татма, çынсем пек лавпа мар, хутаççемпех тухса кайрăмăр.

Тайга йалпа йунашарах пулнăран, унта тул çутăличченех çитрĕмĕр, хутаççене çакса йатăмăр та пĕчĕк тĕмсем çинче мăйăр шырама пуçларăмăр. Анчах пирĕн алла пĕр мăйăр та кĕмест. Çынсем татса пĕтернĕ пулĕ тесе епĕр шаларан-шала кĕрсе кайрăмăр.

— Мĕн шыратăр, Çтаппан пичче?—тесе ыйтрĕ пире хирĕç пулнă çын.

— Кедр майри татма килтĕмĕр-ха,—тетĕп.

— Ара, есĕ кедр йăвăççине те палламастăн-çке!—тесе

çак çын манран ахӑлтатса кулма пуçларӗ, йулашкинчен пӗр пысӑк йӑвӑç çине кӑтартрӗ те:

— Ав кедр йӑвӑççи!—терӗ.

Карчӑкпа иксӗмӗр те çав йӑвӑç патне пырса тӑтӑмӑр. Йӑвӑçӗ калама çук çӳлӗ; тӑрринеле пӑхсан, çӗлӗк хывӑнса ӳкмеле. Пӗртте ӗненессӗм килмест, пӗртте кедр йӑвӑççи пек туйӑнмасҭ. Пӗр хурланки те пулсан татӑлса анмӗ-ши, тесе пурт тӑршшипе çапрӑм йӑвӑçа. Анчах ун çинчен пӗр хурланкӑ та анмарӗ.

— Çтаппан, Çтаппан!—тет манӑн карчӑк.—Пӑх-ха, пӑх çӳлеле!

Çӳлелле пӑхрӑм та тӗлӗнсех кайрӑм. Йӑвӑçӑн лапсӑрка турачӗсем çинчен пӗр кӗтӳ кайӑк вӗççе тухса кайрӗ. Хӑйсем кӑвакарчӑнсем пысӑкӗш, вӗсем пекех кӑвак. „Мӗнле кайӑксем-ши кусем?“, тетӗп. Вӗсем ларнӑ йӑвӑç патне кушак пек йӑпшӑнса пытӑм та, куççене сиктермесӗр пӑхма тытӑнтӑм. Хӑйсем калама çук самӑрланса кайнӑ, пӳрне хулӑнӑш сар çӑвӗ тӗкӗсем витӗрех курӑнса тӑраҭ. Манӑн куç-пуç алчӑрхаса кайрӗ, пыр йарӑнса илчӗ, пӗр кайӑкне тытса тутанса пӑхас килчӗ.

Çак шухӑша пула кедр мӑйрине те татма манса кайнӑ, арӑмпа иксӗмӗр те киле пуш хутаççене çеç йӑтса таврӑнтӑмӑр, йалти çынсем пирӗнтен кулма пуçларӗç.

— Е-е Çтаппан, мӑйӑр татма та пӗлместӗн-çке есӗ!— теççӗ çынсем.

Пастай-ха, курӑр-ха Çтаппан камне, тесе епӗ пӗрре те кӳренмерӗм. Мӑйӑр, тупнӑ тӗлӗнмеле йапала? Мӗнех вӑл мӑйӑр татасси?—тетӗп. Анчах хам чӑнласах мӑйӑрне мӗнле татмалине те пӗлместӗп.

Çав каçпала ман пата кӳршӗсем пырса ларчӗç. Вӗсем калаçнинчен епӗ çакна пӗлтӗм: вӑл çул кедр мӑйри пит

ӑнса пулнӑ иккен, пӑчӑрсем ҫимесен кӗлет тулли мӑйӑр татса хума май пур.

Тинех ӑнласа илтӗм. Епӗ пырса пуртӑтӑршипе шакканӑ йӑвӑҫ—кедр мӑйри йӑвӑҫҫи, унтан вӗҫсе тухнӑ кайӑксем—пӑчӑрсем пулнӑ иккен. Вӑт ухмах халӑх, мӗн тӑваҫҫӗ-ши ҫав вӗт мӑйӑрпа, тытасчӗ пӑчӑрӗсене, тетӗп.

Ҫапла епӗ, кедр мӑйрине татас вырӑнне, йепле пулсан та пӑчӑрӗсенех тытма шутларӑм. Пӑчӑрсем питех чейе тенӗрен манӑн вӗсене мӗнле тытмали ҫинчен лӑпах пӗр ҫӗр шутламала пулчӗ.

— Ҫтаппан, мӗншӗн ара ҫывӑрмастӑн?—тет карчӑк епӗ ҫывӑрмасӑр шутласа выртнине курса.

— Хӑнкӑласем ҫыртаҫҫӗ, ҫывӑрма та памаҫҫӗ,—тетӗп карчӑка.

Автансем виҫҫӗмӗш хут авӑтсан, манӑн пуҫа калама ҫук ӑслӑ шухӑш пырса кӗчӗ. Савӑннипе сиксе тӑрса ташлассӑм килчӗ, анчах канлӗ ҫывӑракан арӑма вӑратас мар, терӗм.

Хам ҫав самантрах тула тухса лаша кӳлтӗм, ҫурӑм хыҫне икӗ ҫӑварлӑ пӑшал ҫакрӑм, пилӗк тавра авӑрланӑ патрунсем чиксе лартнӑ сунарҫӑ пиҫиххине ҫыхрӑм, пӳрте кӗрсе карчӑка вӑратма тытӑнтӑм.

— Карчӑк, тӑран пӳлӗ? Шӑналӑк тата виҫӗ михӗ хатӗрле, пӑчӑрсем тытма кайӑпӑр,—тетӗп.

Манӑн карчӑк аран-аран вӑранчӗ, хӑй пӑчӑрсем иккенне те пӗлмест.

—Намӑс мар-и сана, карчӑк? Чаплӑ сунарҫӑ арӑмӗ пулсан та пӑчӑр мӗнне пӗлместӗн!—тетӗп.

Манӑн карчӑк намӑсланмарӗ, тул ҫутӑлманнине курчӗ те:

—Тул ҫутӑлмасӑр йахӑнне те пымастӑп,—тет.



Пӗр кӗтӳ пӑчӑртан ҫурри ытла ҫӗре персе анчӗ.

— Карчăк, пăчăрсем тытма кайатпăр, пăчăрсене тул çутăличчен тытма аван, — тетĕп.

Çапла никрес карчăка аран-аран каласа килĕштертĕм. Апат та çимерĕмĕр, тул çутăлнă çутăлманах тайгана тухса кайрăмăр.

Тул çутăлса çитменнипе хам каллех кедăр йăвăççине паллаймастăп. Çавăнпа манăн шаларан та шала кĕрсе ĕнер тупнă йăвăçах шыраса тупмала пулчĕ. Çапла кун та йанках çутăлса çитрĕ. Карчăка пуртă парса тăршипе кедăр йăвăçне хытă çапма хушрăм, хам тепĕр айккинчен пăчăрсем вĕçсе тухнине кĕтсе тăтăм.

Халт! тутарса çапрĕ карчăк. Çав самантрах кедр йăвăççи çинчен пĕр кĕтӳ пăчăр вĕçсе тухрĕ. Пăчăрсен ушкăнĕ çине умлăн-хыçлăн персе йатăм—пĕр кĕтӳ пăчăртан çурри ытла çĕре персе анчĕ. Карчăкпа иксĕмĕр те пухрăмăр, лăпах çĕр те икĕ пăчăр пулчĕ.

Çывăхрах тепĕр кедр йăвăççи ларать. Карчăка пуртă тăршипе çаптаратăп та хам каллех вĕçсе тухакан пăчăрсем çине умлăн-хыçлăн икĕ хут перетĕп, пăчăрсем татах та нумай персе анчĕç. Пухса шутларăмăр та лăпах икĕ çĕр те пĕр пăчăр пулчĕ. Кашни пăчăрĕ пĕрер килограм пулсан та тăваттă персех вуникĕ пăт какай антартăм-çке епĕ, тесе тĕлĕнетĕп. Капла епĕ тайгари пăчăрсене те веçех тытса пĕтерĕп, тетĕп.

Çапла манăн лав та часах тулса ларчĕ. Карчăк киле кайма минретме тытăнчĕ. Аран-аран килĕштерсе карчăка виççĕмĕш кедр йăвăççине çапма хушрăм.

Халт! тутарса çапрĕ карчăк тарăхса çитнипе. Те ытлашши хытă çапнăран, пăчăрсем çăмăр пĕлĕчĕ пек хуп-хура вĕçсе тухрĕç. Иккĕ пенипех икĕ çĕр аллă ытла пăчăр ӳкертĕм. Пăхатăп, пăчăрсен шучĕ пĕрре те чакман. Йăпăр-йапăр



Манăн лаша урапана вырăнтан та тапратаймаст, карчăкпа иксĕмĕрĕн те ăна пулăшса пымала пулчĕ.

пăшалăн икĕ çăварне те авăрланă икĕ патрун кĕртсе лартатăп та, ниçтала та вĕçсе кайма ĕлкĕреймен пăчăрсен ушкăнне перетĕп. Татах темĕн чухлĕ пăчăр анчĕ. Ура пусмалăх вырăн йулмарĕ, ăçта пăхнă унта пăчăр выртат.

Пăчăрсене пурне те пухса пĕтертĕмĕр те лав çине тийеме пуçларăмăр. Пăшалпа патрунсене, лав çине хурсан ўксе йулчĕç тесе, урапа тĕпне хурса хăвартăм.

Манăн лав, кĕлте тийенĕ пекех, пысăкланса кайрĕ, килтен илсе тухнă шăналăкпа михĕсем пăчăрсем çине витме те çитмерĕç. Çапла манăн пăчăрсене нимĕнпе витмесĕрех турттарса тавăрăнмала пулчĕ.

Анчах манăн лаша урапана вырăнтан та тапратаймаст. Ирĕксĕрех карчăкпа иксĕмĕрĕн те урапана хыçалтан тĕртсе лашана пулăшса пымала пулчĕ. Çапла хăтланкаласа аран-аран киле çитрĕмĕр, лаша та, хамăр та чăм шыва ўкрĕмĕр.

Ман пата кўршĕсем кăна мар, пĕтĕм йал пухăнчĕ.

— Йепле тытрăн та, йепле тытрăн çакăн чухлĕ пăчăр?— тесе тĕлĕнсе ыйтаççĕ манран.

— Мĕн тĕлĕнмели пур унта, — тетĕп. Кедăр йăвăççине пуртă тăршипе çапатăп та, антранă пăчăрсем пăтă пек персе анаççĕ, карчăкпа иксĕмĕр аран-аран пухса ĕлкĕретпĕр, — тетĕп.

Çынсем пĕççисене шарт çапсах тĕлĕнеççĕ манран.

— Чăнах çапла тытрăн-и? — тесе ыйтаççĕ ĕненмен пек пулса.

—Чăнах пулмасăр, кам суйаť сире, ара манăн пăшал та çук-çке,—тетĕп. Тăваттăн каймалаччĕ, вара тата тепĕр лав пухса килме пулаťчĕ, — тетĕп çаксене.

— Мĕнле апла? — тесе ыйтрĕç çынсем.

— Мĕн мĕнли? Карчăкпа пухма та елкĕрейместпĕр, ўкнĕ пăчăрсенчен çурри ытла тăрса тарчĕç, — тетĕп.

Çынсем мана ĕненсех пăрахрĕç, лашисене кўлчĕç те арăмĕсене тата ачи-пăчисене лартсах пурте тайгана çĕмĕрттерчĕç.

Епĕр карчăкпа иксĕмĕр пĕр лав пăчăра çăмласа пилĕк мăн катка пăчăр какайĕ тăварласа лартрăмăр.

Кăнтăрла çитнĕ çĕре хайхи çынсем пурте пĕр пăчăр тытмасăрах пушăла халтăртаттарса таврăнчĕç.

Епĕ вăл вăхăтра чўрече умĕнче тутлă пăчăр какайне çисе ларатăп. Пăчăр какайĕн тутлă шăрши пĕтĕм урама тапса тухнă. Çынсем, хырăмĕсем пит выçнипе пулас, çак тутлă шăрша чарăна-чарăна тăрса шăршлаççĕ.

„Çав кирлĕ сире, ўлĕм Лапшу Çтаппанĕнчен ан кулнă пултăр“, — терĕм епĕ.

## ПАХЧАЛ КООПЕРАТИВНЕ ВĂЛТАСЕМ КИЛМЕН ПУЛСАН, КĂВАКАЛ ТА ТЫТАС ÇУКЧĔ

Пĕрре мана хамăр йалти ват сунарçă Кăтра Карачăм урамра тĕл пулчĕ те:

— Çтаппан шăлăм! Ех, кăвакал какайĕ тутлă та иккен! Тӳррипех калатăп: есĕ тутанса пăхсан, куйансем çине çавăрăнса та пăхмастăнччĕ,—терĕ.

Кăтра Карачăм суйма йуратнăран тата вăл хăй ĕмĕрĕнче пĕр кăвакал та тытса курманран, епĕ унтан:

— Хăвах çисе куртăн-и вара? —тесе ыйтрăм.

— Хам çийессе çимен те, анчах манăн асатте пĕр улпут çинине курнă,—терĕ Кăтра Карачăм.

— Çын çинине курни мĕн вăл, хамăрăн тытса тутанса пăхасчĕ, —терĕм епĕ. Çавăнтах манăн пуçа кăвакалсем тытас шухăш пырса кĕчĕ. Анчах хам вĕсене мĕнле тытмалине пĕлместĕп.

Камран ыйтса пĕлес-ха, тесе шуглама тытăнтăм. Пĕр йенчен мана, чапа тухнă сунарçăна, çавăн çинчен ыйтса пĕлме те намăс. Тепĕр йенчен, пирĕн йалта кăвакалсем тытма пĕлекен сунарçăсем те çукчĕ. Тытма мар, хăйсен ĕмĕрĕнче кăвакал курнă сунарçă та çукчĕ пирĕн йалта.

Çапла кăвакал какайне тутанса пăхас шухăш кунран кунах ӳссе пычĕ. Йулашкинчен, епĕ куйансем çине çавăрăнса та пăхми пултăм.

Кĕркунне çитрĕ. Кăвакалсем кĕркунне пит самăрланса кайаççĕ тенине илтрĕм те, пĕр ирпе Йамаш вăрманне тухса утрăм. Кăвакалсем шыва йуратнăран, епĕ те тӳрех Патин шурлăхĕ патне çул тытрăм, унта лăпах кăнтăрлапа çитрĕм. Шурлăх патĕнче вун-вуникĕ сунарçă çӳреççĕ, хăйсем пĕри те пĕр кăвакал та тытайман. Вĕсемпе пĕрлех йалти ват сунарçă Кăтра Карачăм та çӳрет.

— Ĕçсем йепле-ха? — тесе ыйтатăп çаксенчен.

— Йапăхрах çав, — теççĕ. — Кăвакалсем нумай, анчах персе ӳкерсен шыва кĕрсе илме шикленетпĕр, шăнса пăсăлма та пулат... Çавăнпа пеместпĕр те, — теççĕ çаксем.

— Çапла çав, — терĕм епĕ те вĕсем майлă пулса. — Алса пысăкĕш кăвакалшăн никамăн та шăнса вилес килмест ĕнтĕ, — терĕм.

Çанталăк ун чухне чăнласах сивĕччĕ вара. Пайан-ыран пур шыв шăнса ларас пек сивĕ тăратчĕ. Çакна пула епĕ сунарçăсене:

— Кăвакалсем тармаççĕ-ха, епĕ уншăн пĕртте хуйхăрмастăп. Анчах кĕр вăрăма тăсăлса кайрĕ, темĕн амакшăн часрах шăнтса лартмаст, — тетĕп.

— Шăнтса лартсан, вара пĕр кăвакалне те кураймăн, — тет мана Кăтра Карачăм.

— Ара есĕ, ватăлнă пулсан та, кăвакалсене мĕнле тытмалине пĕлместĕн-çке! – тетĕп çакна.

— Санран ыйтсах тăмăпăр-ха, — тет вăл мана.

— Кăвакалсене шыв шăнса ларсан тытма аван. Манăн асатте йаланах çапла тытатчĕ, лавĕ-лавĕпе кăвакал тийесе тавăрăнатчĕ, — терĕм.

— Йепле апла! — тесе тĕлĕнсе кайрĕç çак сунарçăсем.

— Тĕлĕнмели нимĕн те çук. Ара, кăвакалсем йаланах

шыв çинче çыврассĕ, шăнтса лартсан пурте пăр çинче тăрса йуласçĕ, — терĕм.

Сунарçăсем мана ĕненсех пăрахрĕç. Ененмесен те май килмест: ара епĕ таврари чи паллă та чаплă сунарçă-çке.

Çапла вĕсем савăнса пурте киле май уттарчĕç, епĕ шурлăх патĕнче пĕр пĕччен тăрса йултăм. Кăвакалсем курасран, хам çăка хăвăлĕ ăшне кĕрсе лартăм. Сивĕ пулнăран çавăнтах виçĕ çĕклем хăрăк турат пухса кăват чĕртсе йатăм. Манăн çăка хăвăлĕ мунча пекех ăшăнса çитрĕ, епĕ çири тумтире хывса сартăм та пĕр кана лайăх çывăрса илтĕм. Хам питех кулăшла тĕлĕк куртăм. Шывсем шăнса ларнă пек, малтан курнă сунарçăсем лашасене кӳлсе, пĕр пĕринпе ăмăртсах, Патин шурлăхĕ патнеле сиккипе чуптарассĕ пек. Хăйсен урописем шăн çĕр çинче аслати пек халтăртатса пырассĕ пек, хам та çав сасăпа вăранса кайрăм.

Пăхатăп та тĕлĕнсех кайатăп. Çав сунарçăсем шуйлантарса йанă кăвакалсем пурте шурлăха пухăннă — шыв çинче аллаппи пысăкĕш те вырăн йулман; ăçта пăхнă унта кăвака çӳрет. Хăйсем пит самăрланса çитнĕ, çапах та апатшăн. Пĕр кăвакалĕ пысăк шапана урлăла хыпнă та, çăтса йарасшăн тапаçланат, теприсем çавăнтах унăн çăварĕнчи апатне хыпса илесшĕн çунса çӳрессĕ.

— Ехе, терĕм. Есĕр пит выçă, сире апат памала мĕн, терĕм. Çав самантрах ман пуçа никам шутласа кăларайми ăслă шухăш пырса кĕчĕ. Пĕрреччен епĕ, пĕр сунарçă кăвакалсене сысна çăвĕ татăкĕпех нумай тыгни çинчен илтнĕччĕ. Анчах унăн кăвакалĕсем сысна çăвне ăмсанса хыпнипех çăвĕ çумне çыхнă çип çине тирĕне-тирĕне ларнă. Кунти кăвакалсем пĕртте апла тирĕнсе ларас пек туйăнмарĕç. Çапла манăн каллех тепĕр ăслă шухăш шухăшласа кăлармала пулчĕ.

Епӗ хамӑн пуҫа чи ҫывӑх йулташран та ытларах шанатӑп, мӗншӗн тесен вӑл мана нихҫан та улталаман. Вӑл мана темӗнле хӑрушӑ инкекрен те пӗр самантрах хӑтӑлмали мел тупса парат. Ҫакна аса илсе, епӗ тӳрех киле май утрӑм, кӑвакалсене мӗнле тытмали ӑслӑ меле те вӑлах шутласа кӑларӗ-ха, терӗм.

Хӗвел анса ларас умӗн епӗ лӑпах Пахчал йалне ҫитрӗм. Пахчал кооперативӗ уҫӑ, халӑх лӑках кӗрсе тулнӑ. Мӗнле те пулсан лайӑх тавар илсе килнӗ пулӗ, тесе епӗ те шалала кӗрсе кайрӑм.

— Сут тума пӗлместӗр! Вӑлтасене хӗле кӗрес умӗн илсе килмеле-и вара?! —тесе вӑрҫат пӗри.

— Тӗрӗс калатӑн, хаљ кам илтӗр вӗсене,—тет тепри.

— Мӗнле вӑлтасем? —тесе ыйтрӑм тавар сутаканӗнчен.

— Мӗнле вӑлтасем?.. Пулӑ тытмалисем,—тет ҫак мана.

Епӗ халиччен нихҫан та вӑлта курманччӗ, ҫавӑнпа кунта килнӗ май вӑлтасене те курсах кайас терӗм. Мана пӗр ҫыхӑ вӑлта тыттарчӗҫ.

— Вӑлтисене те илме пӗлмен. Ҫак пысӑкскерсене пулӑ йепле хыпма пултарӗ, —тет кӗреҫе сухаллӑ ҫын.

Ҫак самантрах манӑн пуҫ ӑслӑ шухӑша шухӑшласа та кӑларчӗ. Ара ку вӑлтасем ҫине сысна ҫӑвӗ лартса Патин шурлӑхӗнчи кӑвакалсене пурне те тытатӑп-ҫке епӗ, терӗм. Ҫавӑнтах вӑлтасене пӗтӗмпех илтӗм те килеле утрӑм.

Манӑн карчӑкӑн виҫӗ мӑн ҫӑмха кӗр ҫиппи пурччӗ. Киле тавӑрӑнсанах епӗ ҫав ҫипе метршар тӑршшӗ татса кашнинех сӳс тилхепе ҫине ҫыхрӑм. Ҫапла епӗ вунӑ тилхепе ҫинче ҫыхса тухрӑм, кашни тилхепи ҫумӗнчех икшер ҫӗр ҫип пулчӗ: ҫав ҫипсенчен вӑлтасем ҫыхса йатӑм, кашни вӑлти ҫинех пӗрер татӑк сысна ҫӑвӗ тӑхӑнтартӑм. Вун тилхепине те Патин шурлӑхне кайса йатӑм.



Икĕ çĕр кăвакал çав тери пысăк йăвăça тымарĕ-мĕнĕпех кăкласа таçта вĕççе кайнă.

Кашни вăлтинех пĕр кăвакал çакланасса епĕ малтанах шанса тăтăм. Çавăнпа тилхепесене, кăвакалсем йатса кайасран, епĕ йăвăçсенчен çыха-çыха лартрăм.

Çапла епĕ вунă тилхепе çинче икĕ пин вăлта хăвартăм. Пĕрер кăвакал çаклансан та икĕ пин кăвакал пулать тесе, тата икĕ пин кăвакала пĕр лавпа турттарса килме май çук тесе, тепĕр кун ирхине кăвакалсем тийеме карчăкпа иккĕн икĕ лавпа тухса кайрăмăр.

Мĕн шутлани тĕрĕсех пулчĕ: манăн вăлтасем çине кашнинех пĕрер кăвакал çакланнă. Анчах, вунă тилхеперен пĕри çук. Тилхепине çыхнă йăвăçĕ патне пытăм — йăвăçĕ те çук; икĕ çĕр кăвакал çав тери пысăк йăвăça тымарĕ-мĕнĕпех кăкласа таçта вĕçсе кайнă. Тĕлĕнсех кайрăм. Кăвакалсем пĕрте епĕ шутланă пек мар иккен: вĕсем калама çук вăйлă. Анчах темĕнле вăйлă пулсан та, вĕсем çав йăвăça инçетех илсе кайайман пулнă.

Кăвакалĕсене тытма çав тери ансат пулнă пулсан та, лавсем çине тийесе пĕтерме питех йăвăр пулчĕ. Кашни кăвакалнех малтан çĕçĕпе пусмала пулчĕ, унсăрăн вĕсем хамăра та лавсемпе пĕрлех çĕклесе таçтала вĕçсе кайĕç, терĕм.

Икĕ пин кăвакала тасатса какайне каткасем çине тăварласа лартиччен лăпах виçĕ кун иртрĕ. Тăваттăмĕш кунĕнче çанталăк сивĕтрĕ, шывсем пĕр каçрах шит хулăмĕш шăнса ларчĕç. Епĕ çăка хăвăлĕнче çывăрса курнă тĕлĕк чăн пулас йапаланах пĕлтерчĕ. Шывсем шăнса ларнă хыççăн, Йамаш йалĕнчи сунарçăсемпе Кăтра Карачăм чăнласах лашисене кӳлсе Патин шурлăхĕ патне вĕçтернĕ. Анчах вĕсем унта пĕр кăвакал та курман. Епĕ Йамаш вăрманĕнчи кăвакалсене пурне те хам тытса тавăрăннă иккен.

## ХУРКАЙĂКСЕНЕ ТЕ ЛАВĔ-ЛАВĔПЕХ ТЫТАТТАМ

Есĕр хуркайăксен сассине илтнĕ пулсан та, хăйсене курман. Есĕр вĕсене курма та пултарайман, мĕншĕн тесен вĕсем пит çӳлтен вĕçсе кайаççĕ.

Çапла пулсан та епĕ хуркайăксене тытса курнă. Пĕрне кăна мар, ушкăнĕ-ушкăнĕпех, пĕрне тартмасăр тытнă.

Хуркайăксем кунта пурăнмаççĕ. Хăшĕсем — вĕсем çурçĕрти пăрлă тинĕссенче, теприсем тата кăнтăр йенче пурăнаççĕ, — теççĕ. Анчах çак суйа халлапсене епĕ пĕрне те ĕненместĕп, мĕншĕн тесен хуркайăксем ăçта пурăннине епĕ хам та пĕлместĕп.

Маншăн çакă кăна паллă. Хуркайăксем çулсеренех пирĕн йал урлă çуркунне вĕçсе кайаççĕ. Вĕсем пĕчченшерĕн мар, пĕр-пĕрин хыççăн карталанса, ушкăнпа, питĕ çӳлтен вĕçсе кайаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ, есĕр вĕсен сассисене илтнĕ пулсан та, хăйсене патĕнчен курма пултарайман.

Çапла пĕр çулхине йаланхи пекех çуркунне çитрĕ. Йаланхи пекех пулсан та, вăл çуркунне хуркайăксем тĕлĕшĕпе ăраснарах пулчĕ: пирĕн йал çинчен кунсерен çирĕмшер те вăтăршар ушкăн хуркайăк ирте-ирте кайатчĕç. Пăхаттăмччĕ те шалтах тĕлĕнеттĕм: мĕн чухлĕ какай манăн çăвара кĕмесĕр сайа кайат, тесе йулаттăм.

Епĕ кăна мар, ытти сунарçăсем те вĕсем çине питех

ӑмсанса ӑшӑ куҫпа пӑхса йулаҫчӗҫ; пурин те вӗсене тытса тутанса пӑхас килетчӗ. Хуркайӑксен сассине илтсенех, пӑшалӗсене йатса тухатчӗҫ те умлӑн-хыҫлӑн пеме тытӑнатчӗҫ. Анчах пӗр ушкӑн хуркайӑкран пӗри те ҫӗре ӳкместчӗ.

Вӗҫкӗн Ваҫҫа, вӗсем питех ҫӳлтен вӗҫсе кайнӑ пирки, пӳрчӗ тӑррине йе ҫӳлӗ йӑмра ҫине хӑпарса перетчӗ, хӑй ҫапах та пӗрне те персе антараймастчӗ.

— Ваҫҫа пӑйахам, йӑмра ҫине хӑпарса периччен санӑн пӗлӗт тӳпине ҫитекен пусма тумалаччӗ. Пусма ҫине хӑпарса хуркайӑксене те чӗрӗлех тыта-тыта анмалаччӗ, — тесе кулатчӗҫ унтан кӳршӗ арӑмӗсем.

Вӗҫкӗн Ваҫҫа вӗсене ҫиленсех ҫитетчӗ, сухалне ҫӑварне ҫыртса пӗр чӗнмесер килне кӗрсе кайатчӗ.

Хуркайӑксене тытас шутпа пирӗн йал сунарҫисем мӗнмӗн хӑтланса пӑхмастчӗҫ-ши? Пӗрисем хире шӑналӑк тухса саратчӗҫ, унта сӗлӗ сапса кунӗ-кунӗпех хуркайӑксем анасса кӗтсе выртатчӗҫ. Теприсем тата, хуркайӑксем Йамаш вӑрманӗнче пурӑнаҫҫӗ тесе, кунӗн-ҫӗрӗн унта вӗсен йӑвисене шыраса ҫӳретчӗҫ.

Епӗ вӗсем пек хисепсӗр сунарҫӑ пулса кӳршӗсемпе йал-йыша та култарман. Паллах, вӗсем пек айванланса хӑтлансан, пӗр хуркайӑкне те тытаймастӑн.

Пурне те паллӑ, унпек вӑхӑтсем ҫитсен епӗ хамӑн пуҫ ҫине ытларах шанатӑп, мӗншӗн тесен манӑн пуҫӑм пурне те шухӑшласа тупат. Анчах хам пулӑшмасан, вӑл та пӗр пӗччен нимӗн тума та пултараймаст. Ҫавӑнпа епӗ хам та хуркайӑксене мӗнле тытасси ҫинчен шухӑшлама тытӑнтӑм.

Малтанах ҫакна пӗлтӗм. Хуркайӑксем ыраш калчи ҫиме йуратаҫҫӗ иккен. Вӗсем кӑнтӑрла пӗр канмасӑр вӗҫсе кайаҫҫӗ те каҫпала, ҫынсем лӑпланса ҫитсен, ӑҫта та пул-

сан айлăм та тӳрем йе сăртлă вырăна ларса ыраш калчи çийеççĕ.

Пирĕн йал патĕнче çавнашкал вырăнсем икĕ тĕлте пур. Пĕри — Сармантей çучĕ текен сăртлă вырăн, тепри — Çавал шывĕн сулахай йенчи улăхĕ. Çак вырăнсене иккĕшне те кайса пăхса килтĕм. Сармантей çутĕнче ыраш калчи питех начарччĕ çавăнпа унта пĕр уйăх çимесĕр пурăннă хуркайăк та анса ларассăн туйăнмарĕ. Çавал улăхĕнче пачах урăхла вара. Çавал шывĕ йелĕве тухса ыраш калчисем нумай çĕрнĕ пулсан та, тĕллĕн-тĕллĕн кĕççе майлах хулăм та симĕс лараççĕ.

Çӳресен-çӳресен, епĕ çакăнта ăраснах симĕс ӳсекен пĕр пĕчĕк вырăн тупрăм. Патне пырса тăтăм та тĕлĕнсех кайрăм: ăçта пăхнă унта хуркайăксен йĕрĕсем курăнаççĕ.

— Е-е, есĕр кунта ларатăр иккен, терĕм те вăхăта пĕр тăсмасăр килеле уттартăм.

Çапла епĕ хуркайăксем ларса апатланакан вырăна тупрăм. Манăн вĕсене мĕнле тытасси çинчен шухăшласа кăларасси кăна йулчĕ. Анчах шухăшлас ĕç — манăн ĕç мар, вăл пуç ĕçĕ пулаť, терĕм.

— Ну, йуратнă пуçăм! Епĕ тăрăшса вĕсем ларса апатланакан вырăна тупрăм. Халĕ ĕнтĕ, есĕ ĕçле-ха, вĕсене мĕнле тытмали меле шухăшласа туп-ха, терĕм.

Пуç мана итлерĕ. Пĕр самантрах вăл пулă тытма тесе карчăк çыхса хатĕрленĕ сĕрекене аса илчĕ. Çав сĕрекене улăхри симĕс калча çине сарсан, калча çиме анакан хуркайăксем пурте майĕсемпе çак сĕреке çине тирĕнсе ларас пек туйăнчĕ.

Çак ăслă шухăш çинчен никама та пĕр сăмах каламарăм. Каç пулсанах сĕрекене çав симĕс калча çине кайса сарса хутăм. Майĕсемпе тирĕнсе ларнă хуркайăксем çĕк-

лесе кайасран, сёрекене çĕр çине хытă çапса лартнă вĕрен пăтисенчен çыха-çыха лартрăм та, киле таврăнтăм.

Çав каçхине пирĕн йал сунарçисем, Вĕçкĕн Ваççа патне пухăнса, хуркайăксене мĕнле тытасси çинчен сӳтсе-йавма пуçланă. Мĕн тума шутлаççĕ-ши кусем, тесе епĕ те çавăнта кайрăм. Вĕçкĕн Ваççа, намăса пĕлмесĕр, çаплах суйеçтерет:

— Мĕнле тытмалине пĕлетĕп,— тет çак.— Хуркайăксем кăнтăрла çеç çӳлтен кайаççĕ мĕн, каçпа вĕсем пит айалтан вĕçеççĕ иккен, хире çеç тухса сыхласа лармала,— тет Ваççа савăнса кайнипе.

Çакнашкал пустуй халлапсене итлесе ларнă хыççăн, текех чăтса ларма пултараймарăм, епĕ те сăмах хушрăм:— Çĕрле тухса ларсан, хăвна та хăйсемпе пĕрле йăтса кайĕç,— терĕм Ваççана.

Вĕçкĕн Ваççа çиленсе çитнипе манпа тавлашса кайрĕ.

— Хăвна тĕнчери чи чаплă сунарçă шутласан та, пĕр хуркайăкне те тытаймастăн, тесе тăрăхлама пуçларĕ манран.

— Ваççа пичче,—терĕм ăна.—Хаљ тесен халĕ аллă хуркайăк чĕрĕлех тытса килсен, супăњ хăмпи пек çурăлса каймăн-ши? терĕм ăна.

Вĕçкĕн Ваççа пĕр шуралса, пĕр хĕрелсе кайрĕ те:

— Хам лашанах кӳлсе паратăп, аллăшне мар, пĕрне те тытса килейместĕн,— тет мана.

Епĕ килĕшрĕм. Вăл лаша кӳличчен шурăмпуçĕ те шуралса килчĕ. Хампа пĕрле Ваççа ачи йавса хатĕрленĕ çăпата кантрисем илтĕм те, Çавал улăхне кайрăм.

Каçпа пуç мĕн шутлани тĕрĕсех пулчĕ. Сĕреке сарса хăварнă ыраш калчи çине пĕр ушкăн хуркайăк аннă та калчана хыпалансах çинипе, пурте мăйĕсемпе сĕреке



Епĕ çитнĕ вăхăтра хуркайăксем çунаттисемпе çеç çапкаланса выртаççĕ.

çине тирĕне-тирĕне ларнă, пĕр хуркайăкĕ те пуçне кайала кăларайман.

Епĕ çитнĕ вăхăтра вĕсем çунаттисемпе çапкаланса çеç выртаççĕ. Çĕр çине çапса хăварнă вунă пăтаран тăххăрĕшне турта-турта кăларнă. Çапла вара хуркайăксем тирĕнсе ларнă манăн сĕреке пĕр пăта çинчех тытăнса тăнă. Ăна та туртса кăларнă пулсан, хуркайăксем сĕрекене те хăйсемпе пĕрле илсе кайнă пулĕччĕç, вара манăн Вĕçкĕн Ваççапа тавлашни те усăсăрах пулатчĕ.

Малтан епĕ хуркайăксене кашнинех çуначĕсенчен çыха-çыха тухрăм, унтан лав çине тийерĕм. Шутларăм та — тĕлĕнсех кайрăм — манăн сĕреке çине çитмĕл икĕ хуркайăк тирĕнсе ларнă пулнă.

Йала çитнĕ çĕре тул йанках çутăлса кайрĕ. Çынсем епĕ хуркайăксене мĕнле тытнине ан пĕлччĕр тесе, сĕрекене киле кĕрсе хутăм, унтан тин Вĕçкĕн Ваççа патне кайрăм. Манран сунарçăсем кăна мар, йалти пур çын та тĕлĕнчĕ.

Çакăн хыççăн епĕ ирсерен пĕрер лав хуркайăк тийесе килеттĕм.

## ЙАМАШ ВĂРМАНĔНЧИ ĂСАНСЕНЕ ПУРНЕ ТЕ ХАМ ХЫÇРАН ЙЕРТСЕ КИЛТĔМ

Мĕнле кăна тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем пурăнмастчĕç-ши Йамаш вăрманĕнче! Таврари пур йалсенчи сунарçăсем те унтан тухма та пĕлместчĕç. Кунĕн-çĕрĕн, хĕлĕн-çăвĕн Йамаш вăрманĕнче сулланса çӳретчĕç. Кун каçа пĕр куйан тытмасан та, вĕсем уншăн пĕртте пăшăрханмастчĕç. Ăнсăртран пĕр куйанне лектерсен, çав куйан тирне сутма тесех Çĕрпӳ пасарне кайатчĕç.

Миçе мăшăр çăпата çĕтмен-ши, миçе пăт тар усăсăр персе сайа йаман-ши вăл сунарçăсем! Çакна темĕн пек пысăка вĕреннĕ çын та шутласа кăларас çук. Йулашкинчен, Йамаш вăрманне те çав тар тĕтĕмĕнчен кăвак сăн çапрĕ, вăрман хăйĕн йешĕл тумне çухатса, тĕссĕрленсе кăвакарса йулчĕ.

Анчах тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем çапах та вăл вăрмана йурататчĕç, унта вĕсем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпех пурăнатчĕç. Уçтук варĕнчи чăтлăхра упасем йышлă çӳретчĕç, Уйпуç варĕ тилĕсен йăви пулса тăчĕ, Патин шурлăхĕнче кăвакалсем пĕлĕт пек вĕççе çӳретчĕç.

Епĕ вĕсене çӳлсерен хисепсĕр нумай тытса пурăнтăм. Çуркунне умĕн вăрманта пĕр кайăк тĕсĕ те тăрса йулмастчĕ, çитес хĕлре сунара ăçта кайас-ха, тесе те час-час шутлаттăмчĕ.

Манăн телейе, кĕркунне умĕн вĕсем каллех йышлан-са çитетчĕç, маншăн вара пĕтĕм тĕнче тепĕр майлă ул-шăнса кайнă пек туйăнатчĕ.

Тӳррипех калатăп, Йамаш вăрманĕ пулман пулсан, епĕ те чаплă та паллă сунарçă пулас çукчĕ. Йамаш вăрманĕн-че епĕ сăсар, тилĕ, кашкăр, упа хисепсĕр нумай тытрăм. Йамаш вăрманĕнчех епĕ хамăр çĕршывра ĕмĕрне те пул-ман тискер кайăка—арăслана та тытрăм. Иулашкинчен Йамаш вăрманĕнчех епĕ ăсансем те тытма вĕрентĕм.

Ăсансем тенĕрен, сире вĕсене мĕнле тытни çинчен каласа парам.

Малтан епĕ ăсан мĕнле кайăк иккенне те пĕлмен. Ăна епĕ, кăвакалсем пекех, шывра пурăнакан кайăк пу-лĕ тесе шутланă. Вăл вуçех урăхла кайăк иккен. Вăл шурлăхсенче мар, хурăнпа пилеш нумай ӳсекен вырăн-сенче пурăнма йуратат, мĕншĕн тесен ăсан çуркунне ху-рăн кăчки, кĕркунне пилеш çиме йуратат.

Çакна лайăх сăнаса пĕлнĕ хыççăн, манăн пуç вĕсене мĕнле тытмали меле часах шутласа кăларчĕ. Епĕ çуркун-не çитсенех Йамаш вăрманне кайса, хурăнсемпе пилеш-сем нумай ӳсекен вырăн шыраса тупрăм.

Çав вырăнта кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпех ăсансем тĕл пултăм. Анчах ун чухне вĕсем пит начарччĕ. Паллах, хурăн кăч-ки çинипе ăсансем мар, килти чăхсем те самăрланас çук. Çавăнпа епĕ вĕсене çуркунне мар, кĕркунне тытма шут-ласа хутăм. Кĕркунне вĕсем, пиçсе çитнĕ пилеш çини-пе самăрланĕç тата кашнийех пĕрер пусăм чĕпĕ кăлар-нипе хăйсен йышне те ӳстерĕç, терĕм.

Анчах кĕркуннене епĕ аран-аран кĕтсе илтĕм. Пĕр-реччен, кӳршĕ арăмĕсем Йамаш вăрманне милĕк касма

тесе кайнă та, епĕ шыраса тупнă вырăна çитсе кĕнĕ, унтан пĕр ăсан чĕппи тытса таврăннă.

Çав ăсан чĕппине вĕсем пурте пĕрле пĕçерсе çинĕ те, ăсан какайĕ питĕ тутлă пулни çинчен пĕтĕм таврана сăмах сарнă, çитменнине тата ăсан чĕппине хăш вырăнта тытни çинчен те каласа панă.

Çакăн хыççăн, пирĕн йалти сунарçăсем кăна мар, таврари мĕнпур сунарçăсем кунсеренех Йамаш вăрманне ăсан тытма кайа пуçларĕç. Асансем пит чейе пулнипе çав сунарçăсем пĕри те пĕр ăсан тытаймарĕç. Çапла вĕсем кĕркуннеченех Йамаш вăрманĕ тăрăх пĕр усăсăр суллансa çӳрерĕç.

Йулашкинчен, кĕркунне çитсен, ăсансем тытма кайрăм, тӳрех малтан шыраса тупнă вырăна пытăм. Анчах, кăнтăрлаччен çӳресен те, епĕ пĕр ăсан та кураймарăм. Пĕрре киле кайас тесе, тепре каçченех йулса пăхас тесе шутлатăп. Çапах та пĕр килнĕ пек чухне каçченех йулса пăхас терĕм, хам ыйăннипе аçампа пӳркенсех çывăрма выртрăм.

Темĕн чухлĕ çывăрнă, ăна хам та пĕлместĕп, каçпала вăранах кайрăм, куççене уçса пăхрăм та шалтах тĕлĕнсе кайрăм. Ăсансем ниçта та кайман иккен, çавăнтах пурăнаççĕ. Кăнтăрла курăксем айне пытанса ларса, каçпа пилеш çиме тухнă пулнă. Хăйсем пит самăрланса кайнă, пилеш çине те вĕçсе хăпараймаççĕ.

Епĕ вĕсене пит шеллерĕм, сиксе тăтăм та пилеш татса пама пуçларăм. Ăсансем манран пĕртте шикленмаççĕ, татса панă пек пилеше çисе пĕтерсех пыраççĕ.

Çапла, пилеш çийесшĕн пулса, пĕр самантрах ман тавра шутласа кăлармала мар нумай ăсан пухăнчĕ. Капла çитерсен, епĕ сире виçĕ кунта та тăрантараймăп, терĕм



Ман хыҫран карташ тулли ӑсан кӗрсе тулчӗ.

те пĕр пилешне тĕпренех касса киле май утрăм. Ăсансем ман хыçран пилеш çине пĕлĕт пек сырăнса пыраççĕ.

Киле лăпах тул çутăлас умĕн çитрĕм. Ман хыçран карташ тулли ăсан кĕрсе тулчĕ. Манăн вĕсене хупса лартмашкăн пысăк вите те çук. Мĕн тума çав терийех нумай йертсе килтĕм-ха кусене,—тетĕп. Хам, пĕччен нимĕн тума аптăранипе, карчăка вăратрăм. Карчăкĕ тата, ыйăхран уçăлса çитменнипе пулас, мана йатлаçма пуçларĕ:

— Мĕн тума çав терийех нумай йертсе килтĕн? Ăçтан илсе килнĕ, çавăнтах кайса йар!—тет карчăк.

— Карчăк, курмастăн-и мĕн, ăсансем вĕт вĕсем,— тетĕп.

Манăн карчăк тин ăна кĕрсе çитрĕ. Пилешрен пĕр тураттине хуçса илчĕ те, ăсансене çуррине йахăнах пӳрте йăхăрса кĕртрĕ, ыттисене вара кӳршĕсенчен шăналăксем пухса карташ варрине хӳтлĕхсем туса хупрăмăр.

Епĕ иккен, Йамаш вăрманĕнчи мĕнпур ăсансене хам хыçран йертсе таврăннă. Вăл ăсансене хĕлĕпе çисен те пĕтереймерĕм, пасара пайтах кайса сутрăм, нумайăшне кӳршĕсене патăм, аллăшне хĕл каçарма хăвартăм. Карчăк вĕсене чăхсемпе йунашар кашта çине лартма вĕрентрĕ.

Çав аллă ăсан çул серенех аллă пусăм чĕпĕ калараççĕ. Çапла епĕ халĕ хам килте усракан ăсан какайĕпех калама çук аван пурăнатăп. Хăççан та пулсан, тен, есĕр Çенер йалне пырса тухăр. Ун чухне вара ман пата кĕмесĕр ан кайăр, сире те ăсан какайĕпе хăна туса йарăп.

## ТĔЛĔНМЕЛЕ КУРĂК ТУПМАН ПУЛСАН, УССУРИ ТАЙГИНЕ ТЕ ÇИТЕЙМЕСТĔМЧЧĔ, ЗООЛОГИ САЧĔ ТЕ ПУЛМАСТЧĔ

Пĕр çулхине маншăн калама çук телейлĕ кĕркунне çаврăнса килчĕ. Виçĕ çул хушши сунара каймасăр пурăннă хыççăн, Йамаш вăрманĕнче тискер кайăксем пит йышланса çитрĕç: ăçта килнĕ унта куйансем сиккелесе çӳреççĕ, ĕмĕрне çын пырса кĕмен чăтлăхсем тилĕсемпе тулчĕç, тарăн варсенче упасем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе çӳреççĕ. Çакна кура ахаль çынсем кăна мар, сунарçăсем те Йамаш вăрманне кайса кĕме хăракан пулчĕç.

Вăрмана кайма мар, хăшĕ-пĕрисем анкарти хыçне те тухма хăратчĕç. Тăмвар пуçĕнче пĕр ушкăн упа çӳренине курнă хыççăн, Вĕçкĕн Ваçça тăр кăнтăрлах, хапхисене питĕрсе, кунĕ-кунĕпе пӳртĕнче ларатчĕ. Унтан калаçма тин вĕренекен ачасем те кулма пуçларĕç.

Пурне те паллă, епĕ нихăçан та, нимĕнле тискер кайăкран та хăраман. Упасене кăна мар, Йамаш вăрманне килсе пурăнма пуçланă арăслана та чĕрĕлех тытса таврăннăччĕ-ха тесе, пĕр ирпе Йамаш вăрманне сунара тухса утрăм.

Ман телейе, вăл кун уйар пулчĕ. Хĕвел, Йамаш вăрманĕ тăррине хăпарса çитсенех, кĕрхи пылчăка пĕр самантрах типĕтсе лартрĕ. Çапла епĕ вăрмана часах çитрĕм, упасем тытас шутпа тӳрех Уçтук варĕ патнеле утрăм.

Уҫтук варӗ тӗлӗнмеле чӑнкӑ та тарӑн вар. Ҫӳлтен пӑхсан, унӑн тӗпӗ те курӑнмасть. Икӗ ҫыранӗ тӑршшӗпе пӳрт пек пысӑк чулсем кӑнратса выртаҫҫӗ. Ҫав чулсем айӗнче тӗпсакай пек тӗттӗм шӑтӑксем пур, вӗсенче упасем йышлӑ пурӑнаҫҫӗ.

Килте Уҫтук варӗ асра та пулманнипе, епӗ пӑшала вӗтӗ пульккӑсемпе ҫеҫ авӑрласа тухрӑм. Паллах, вӗсемпе упасене вӗлерме ҫук. Хӑвӑрах пӗлетӗр: вӗтӗ пульккӑсене пула епӗ пӗрре Ҫӗпӗрти тайгара, йӑвӑҫ тӑрринче, виҫӗ кунта виҫӗ ҫӗр выҫӑ ларнӑччӗ. Ҫакна аса илтӗм те, пӗр пысӑк тунката ҫине ларсах, пӑшалӑн икӗ ҫӑварне те кашкӑр пульккисемпе авӑрларӑм. Авӑрларӑм та: халӗ ӗнтӗ Уҫтук варӗнчи упасене пурне те тытса пӗтеретӗп, тесе малала утрӑм.

Анчах, те ытла та ир тухнӑран, кӑнтӑрлаччен ҫӳресен те упа мар, куйан ҫури те тӗл пулмарӑм. Аптӑранӑ йенне хам: ку упасем мана — Лапшу Ҫтаппанне — шӑршӑранах палласа хӑйсен шӑтӑкӗсене кӗре-кӗре пытанчӗҫ пулӗ, тесе те шухӑшлатӑп.

Манӑн пуҫ мӗн шутлать, ҫав йаланах тӗрӗс пулать. Ҫавӑнпа епӗ, малала апла капла шухӑшласа ҫӳреме пӑрахсах, тӳрех Уҫтук варне анса, мӗнпур упасене хӑйсен шӑтӑкӗсенчен хӑваласа кӑларас, терӗм. Ҫав тӗлӗшпе вар тӗпне анма ансатрах вырӑн шыраса вар хӗррипе утрӑм.

Манӑн ҫичӗ-сакӑр ҫухрӑма йахӑнах каймала пулчӗ, ҫапах та вар тӗпне анма меллӗ вырӑн тупаймарӑм. Йулашкинчен, вар пуҫнех ҫитсе тухрӑм. Кунта хам ӗмӗрте тӗл пулман тӗлӗнмеле курӑк куртӑм. Курӑкӗ чӑнласах тӗлӗнмеле вара. Ытти курӑксем пурте хӑра-хӑра сарӑхса ларнӑ, ҫак курӑк пӗр пӗччен йешӗрсе ӳсет.

— Мӗнле курӑк-ши ку? — тесе пӗшкӗнсе ҫак курӑка

тытса пăхрăм. Вăл, манран вăтаннă пек пулса, çеçкисене çав самантрах пĕр çĕре пуçтарса лартрĕ.

Епĕ тĕлĕнсех кайрăм.—Йепле мерекке курăк пулчĕ-ха ку, çынран та вăтанма пĕлет, терĕм те ăна кăларса каймашутларăм: чӳрече умне лартса йалти пур çынна та тĕлĕнтерес, терĕм.



Мĕнле курăк-ши ку? — тесе пĕшкĕнсе çак курăка тытса пăхрăм.

Анчах вăл курăкăн тымарĕсем пит тарăн анса кайаççĕ. Çавăнпа ăна нийепле те кăкласа кăларма май пулмарĕ. Епĕ вара, Уçтук варне анма пăрахсах, унăн вăррисене шырама пуçларăм. Малтанах чечекĕ ăшне пăхрăм—унта пĕр вăрă та çук. Путех, кун вăррисем тăкăннă пулĕ тесе, пӳрнесемпе çĕре хыпашлама пуçларăм. Манăн алла çинçе туна кĕрсе кайрĕ. Туртса пăхатăп—туна йахăнне те тухмаст. Ирĕксĕрех манăн çав туна вĕçне шыраса тупмала пулчĕ. Вăл туна çав тĕлĕнмеле курăкăн турачех пулчĕ. Çакнашкал туратсем унăн пĕрре çеç мар, темиçе те пур. хăйсем пурте курăк таврала сарăлса выртаççĕ. Кашнин вĕçĕнчех мăйăр пысăкĕш хурансем пур; вĕсен ăшĕнче пăрça

пек пĕрчĕсем куçа йăмăхтарас пек çутăлса выртаççĕ.

Епĕ савăнсах кайрăм. Халĕ ĕнтĕ тымарĕ-мĕнĕпе кăларса аппаланса та тăмастăп, тӳрех вăрринчен шăтарса ӳстеретĕп тесе, пĕр пĕрчине илме хăтлантăм. Анчах пӳрне вĕçĕпе тĕкĕнсенех хуранĕ хупăнса ларчĕ.

Ку, чăнласах, çынран вăтанма пĕлет иккен, унăн куçĕсем те пулĕ тесе, епĕ çавăнта çумрах ларакан йуман хыçне пытанса тăтăм. Мĕн шутлани тĕрĕсех пулчĕ. Нумайах та тăмарăм, çак курăк çеçкисене сарса йачĕ, туна вĕçĕнчи пĕчĕк хуранĕ те уçăлса кайрĕ. Хам куççене пĕр сиктермесĕр пăхса тăратăп. Таçтан пĕр нăрă пырса тухрĕ те уçăлса тăракан хуранĕ ăшне кĕрсе кайрĕ — хуранĕ каллех хупăнса ларчĕ. Мĕн пулчĕ-ха капла, тесе татах куççене сиктермесĕр пăхса тăтăм. Хупăнса ларнă хуран тăрсан-тăрсан каллех уçăлса кайрĕ. Анчах хуран ăшĕнче нăрă тĕсĕ те çук, унăн шăмми-шаки кăна сирпĕнсе ыткăнса ӳкрĕ.

Çакнашкал мерекке курăка, мансăр пуçне, тĕнчере урăх никам та курман пулĕ, мĕншĕн тесен ун пек курăк пурри çинчен епĕ никамран та илтмен. Манăн ăна пит нумай ĕрчетес килчĕ. Хăвăрах шутлăр-ха, унашкал курăка ĕрчетсен, усси те нумай пулаť. Вĕсем çула выђăх-чĕрлĕхе канăç паман ӳпре-пăвансене те пĕтĕмпех çисе пĕтерме пултараççĕ вĕт.

Çапла шутласа йуман хыçĕнчен тухрăм та тӳрех курăкăн пĕр туратне татса илтĕм. Унăн вĕçĕнчи хуранĕ каллех хупăнса ларчĕ. Епĕ вăл уçăласса кĕтсе те тăмарăм, васкасах унăн ăшĕнчи çутă пĕрчине кăларса илтĕм. Анчах вăл пĕрчĕ пиççе çитмен, çавăнпа ăна киле те илсе кайас темерĕм. Çапах та ăна пăрахса хăвармарăм, хам çисе йатăм

Вăл калама çук тутлă пулчĕ, ун пек пăрçа епĕ хам ĕмĕрте те тутанса курман.

Сасартăк манăн ура вăйĕ пĕтнĕ пек туйĕнчĕ, куç хупанкисем йăвăрланса çитрĕç, анаслакан пултăм. Епĕ пуç айне курăк татса хутăм та выртса çывăртăм. Хам питĕ хăрушă тĕлĕк курнă: Йамаш вăрманне улăп йевĕр пысăк çын килнĕ пек, вăл пĕрре йарса пуссах çйчĕ çухрăм кайат пек. Çак çын хăрах урипе ман тĕлех пусрĕ те, епĕ кăштах унăн атти айне пулаттăм пек. Хăранипе кăшкăрса йатăм. Хам сасăпа вăранса кайрăм та, ăна-кăна пĕлмесĕр тăрса лартăм.

Епĕ Йамаш вăрманĕнчен те çўлĕ ларатăп иккен, йăвăçсен тăррисем манăн сухала та перĕнмеççĕ. Мĕнле-ха каппа пултăм?—тесе хамран хам тĕлĕнсе кайрăм. Урасем çине пăхрăм. Вĕсем те темĕн пек вăрăмланса кайнă та Йамаш йалĕн анкарти хыçнех çитнĕ. Хăйсем ўснĕ май йăвăçсене унтала-кунтала çеç йăвантара-йăвантара хăварнă.

Нимĕн тума аптăранипе ура çине сиксе тăтăм. Йамаш вăрманĕ чĕркуççирен те айалта тăрса йулчĕ. Манăн пуç хуп-хуран капланса килекен çăмăр пĕлĕчĕсем ăшне кĕрсе кайрĕ. Çав пĕлĕтсене епĕ пĕрре вĕрнипех айаккала сирсе йатăм. Çакăн хыççăн манăн пуçри шĕлепке те аванах курăнакан пулчĕ. Пуç ўснĕ май вăл та сарăлса пысăкланса кайнă мĕн. Пиншакпа атă çине пăхрăм — вĕсем те, шĕлепке пекех, сарăлса ўссе кайнă, хăйсем тата пĕри те пĕр вырăнтан та çурăлман. Куншăн вара пит савăнтăм, мĕншĕн тесен манăн хама валли çĕнĕ тумтирсем илсе укçа та тăккаламала пулмарĕ.

Анчах манăн пĕр инкек пулчĕ. Хам ўссе пынă май, çакки татăлса кайнипе, манăн пăшал таçта ывтăнса ўкнĕ. Епĕ уншăн пит кулянма тытăнтăм, мĕншĕн тесен манăн




Йамаш вăрманĕ чĕркуççирен те айалта тăрса йулчĕ.

пек лайăх пăшал таврара урăх никамăн та çукчĕ: вăл темĕнле тискер кайăка та тĕл персе тивертетчĕ.

Çав тери лайăх пăшала çын тупĕ те ман пекех чаплă сунарçă пулĕ тесе, епĕ ăна пикенсех шырама пуçларăм. Анчах темле тăрăшса шырасан та пăшала тупаймарăм. Йулашкинчен, хам Уçтук варĕ пуçне выртса çывăрнине аса илтĕм те, пăшал çав вар тĕпнех ывтăнса ӳкнĕ пулĕ тесе, Уçтук варне шырама пуçларăм. Ăна та тупаймарăм. Тарăхнипе пăшал çине ал султăм та малала кайрăм. Пĕр утăм йарса пуссах çичĕ çухрăмра ларакан Йĕкĕрвар йалĕ хыçне çитрĕм. Тĕлĕнсах кайрăм: манăн пăшал çак йал хыçĕнче вырта парать. Кăна пĕлнĕ пулсан, пăшала пикенсе шырама та кирлĕ марччĕ: вăл хамран пĕр утăмра çеç выртнă иккен. Епĕ хамăн куççем питĕ çивчĕ курнинчен тĕлĕнсех кайрăм. Вĕсем Уçтук варне мар, çав тери пĕчĕк йапалана та — кăранташ пысăкĕш тăрса йулнă йапалана та — шыраса тупма пултарчĕç.

Чăнласах манăн пăшал кăранташ пек çеç тăрса йулнă. Çакки çуккипе тата ниçта хума аптăранипе епĕ ăна пиншакăн умри кăсйине чикрĕм. Вăл кăсйа тĕпне анса выртрĕ те курăнми пулчĕ. Сасартăк, пăшалсăр пырсан мана никам та сунарçă выранне шутламĕ тесе, ăна калла кăларма шутларăм, сылтăм алла кăсйана чиксе йатăм.

Малтан çичĕ çухрăма ывтăнса ӳкнĕ пулсан та, пăшала часах шыраса тупрăм, халĕ пиншакăн умĕнчи кăсйине чикнĕ пулсан та, ăна пит нумай шырамала пулчĕ. Темĕн пек тăрăшса хыпаласа пăхрăм, пăшал нийепле те алла кĕмест. Пĕр йенчен, кăсйа шăтăк пулман-ши? тесе, иккĕленсе пăхатăп. Анчах карчăк мана нихăçан та шăтăк кăсйасемпе çӳретменнине аса илсе, пăшал кăсйарах пулĕ тетĕп. Тепĕр йенчен, пиншака хывса кăсйана тавăрса сил-

лес тесе те шутлатăп, пиншакĕ пĕчĕкленсе ларасран хăратăп. Ара пиншаксăр йулсан, шăнса вилме те пулат̆ çак çанталăкра, тетĕп. Çапла манăн пиншак кăсйинчи пăшала лăпах кaçчен шырамала пулчĕ. Вăл çавăнтах, кăсйа тĕпĕнчех выртнă мĕн.

Çавнашкал тертленнĕ хыççăн пăшала, пĕчĕккĕ пулсан та, çурăм хыçнех çакма шутларăм: унтан вăл ниçта та çухалмĕ, терĕм. Анчах манăн пăшалăн çакки çук, вăл хам ӳснĕ май татăлса таçта сирпĕнсе ӳкнĕ. Сасартăк, темле сăлтавпа килтен илсе тухнă вĕрен çинчен аса илтĕм. Ман телейе, çак вĕрен çурăм хыçĕнчех çакăнса тăрат̆. Вăл мана çăпата кантри пек çеç туйăнчĕ. Епĕ савăнсах кайрăм. Вĕрене салтса илтĕм те унтан пăшал çакки турăм. Вунă хăлаç тăршшĕ вĕрен хам тавра лăпах пĕрре çавăрса çыхма çитрĕ.

Кун каçалана сулăнчĕ. Епĕ çапах та киле таврăнмарăм. Тухнă пек чухне ытти вăрмансене те кайса çӳреме шутларăм та малала утрăм. Манăн çул калама çук ӳсĕнсе пырат̆: пĕрре пусатăп та çичĕ çухрăм тăватăп. Çапла епĕ пуйăссене кăна мар, айероплансене те хуса çитсе иртсе кайатăп, хам хыçа курăнмийех тăратса хăваратăп.

Урал тăвĕсем патне çитрĕм. Вĕсен пысăк та çӳлĕ тĕмесем пур. Епĕ урасемпе çав тĕмесем çине пусса утса пыратăп. Çапла епĕ татах та çӳлленсе кайрăм та манăн пуç тачка пĕлĕтсен ăшĕнче пычĕ.

Сасартăк манăн сылтăм хăлха патĕнче темĕнле сасă сĕрлени илтĕнчĕ. Мĕнле сасă-ши ку, нăрă мар-ши ку? тесе хăлха патне алла йарса пăхрăм. Тĕлĕнсех кайрăм: манăн алă виçĕ моторлă айероплана йарса тытрĕ; тинех ăнлантăм: манăн хăлха патĕнчи сасă çак айеропланăн моторĕсем кĕрленĕ сасă пулнă мĕн.

Вăл айероплана епĕ хам ывăç тупанĕ çине лартрăм та пĕчĕк кантăкĕнчен шалала пăхрăм. Унта çынсем туллийех ларса пыраççĕ. Вĕсем пурте халиччен ĕмĕрте те çын пырса кĕмен тайгана ылттăн тухакан вырăнсем шырама кайаççĕ мĕн.

Епĕ йарса пусмассерен çичĕ çухрăм кайнине пĕлсен, çынсем пурте хăйсене айеропланĕ-мĕнĕпех хампа пĕрле илсе кайма ыйтрĕç. Епĕ килĕшрĕм. Хам сывланипе вĕçсе ӳкĕ тесе, епĕ айероплана икĕ пӳрне хушшине хĕстертĕм. Çакăн хыççăн айероплан ăшĕнчи çынсем савăнсах кайрĕç. Вĕсем пурте пĕчĕк кантăккисене уçса йарса çул тăрăшшĕпе калаçса пычĕç. Çапла манăн çул татах ӳсĕнсе пычĕ. Тепĕр сехет кайсанах епĕ Инçетри Хĕвелтухăç крайне çитрĕм.

Кунта манăн айероплан ăшĕнче ларса пыракан çынсемпе уйрăлмала пулчĕ. Вĕсен çурçĕр йеннеле каймала пулчĕ. Хăйсене пĕр кун кайас вырăнне пĕр сехетрех илсе çитернĕшĕн çынсем мана чĕререн тав турĕç, тата нумай пурăнма сывлăх сунчĕç. Епĕ тискер кайăксем тытма шутланине пĕлсен, лҕотчикĕ мана Уссури тайгине кайма сĕнчĕ, унта каймали çула та хăйех кăтартса пачĕ.

Епĕ айероплана ывăç тупанĕ çине лартрăм та çынсем пурте кантăкĕсене хупрĕç. Лҕотчикĕ кабинă ăшĕнчен сиксе тухса, манăн ывăç тупанĕ тикĕсси-тикĕсмаррине сăнама пуçларĕ.

— Тапранса кайма хĕнтерех,—тет лҕотчик.

— Нимĕн те хĕн мар,—тетĕп.—Есĕ моторĕсене ĕçлеттерме пуçла та кабинăна кĕрсе лар, айероплана хам вĕрсе тапратса йарăп,—тетĕп.

— Апла йурамаст,—тет лҕотчик.—Тапранса кайас умĕн, айеропланăн сахалтан та пĕр минут хушши сан

ывăç тупанĕ тăрăх чупса каймала,—терĕ те айероплан ăшĕнчен пĕр çыннине кăларса, унпа пĕрле ман ывăç тупанне виçме пуçларĕ.

Манăн ывăç тупанĕ калама çук пысăк иккен. Анчах çапла пысăк пулсан та, лѢотчик кăшт çĕре ӳксе вилетчĕ. Вăл ′акă мĕнле пулчĕ: лѢотчикĕ, малта пыраканскер, шĕвĕр пӳрнепе вăтам пӳрне хушшинчи çурăка анах кайрĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ — манăн пилĕк тĕлĕнче шапшурă йапала уçăлса кайрĕ. ЛѢотчик хăйпе пĕрле парашӳт илнĕ мĕн. Манăн пӳрнесем хушшинчен тухса ӳксенех парашӳтне уçса йанă. Куншăн вара епĕ çеç мар, айероплан ăшĕнче ларакан çынсем те питĕ савăнчĕç.

ЛѢотчика епĕ çĕре анса çитиччченех хам ывăç тупанĕ çине çĕклесе лартрăм. Вăл парашӳтне майласа пуçтарчĕ те çурăмĕ хыçне çакрĕ. Вăл айалала ӳкнĕ пулсан та нимĕн те хăраман. Хăрама мар, вăл манăн ывăç тупанĕ çуррине çитиччен 478 метр пулнине те манман.

Епĕр вара ывăç тупанне малала виçсе аппаланса та тăмарăмăр, 478 метр çумне тата çавăн чухлĕ хушрăм та хамăн ывăç тупанĕн тăршшĕ пĕр çухрăма йахăнне пĕлтĕм.

— Йепле пулсан та чуптарма тăрăшăп,—тет лѢотчик.
— Есĕ пĕр минут та пулин сывламасăр тăр,—терĕ те вăл айероплан моторĕсене ĕçлеттерсе йачĕ.

— Манăн вăта пӳрне вăрăмрах, есĕ çав пӳрне тăрăх чуптарса пыма тăрăш, терĕм те лѢотчика вăта пӳрне çине кĕрсе кайакан йĕр туса патăм.

Айероплан вăта пӳрне вĕçне çитсенех сывлăшала йерипен хăпарса кайрĕ. Ун ăшĕнче ларса пыракан çынсем шурă тутăрсем вĕлкĕштерсе манпа сывпуллашрĕç. Анчах хам, сывламасăр тăма хăнăхманскер, пĕр минут хушши сывламаннипех кăштах чыхăнса вилсе кайаттăм.

Айероплан часах куçрэн çухалчĕ, епĕ лђотчик кăтартса панă çулпа малала утрăм. Манăн нумай каймала пулмарĕ, — çич-сакăр утăм йарса пуссанах Уссури тайгине çитрĕм.

Вăл тайга калама çук пысăк. Унта епĕ етем пырса кĕмеле мар вырăнсем, асар-писер тарăн варсем тĕл пултăм. Вĕсенче темĕн тĕрлĕ тискер кайăксем çĕмĕрсе çӳреççĕ, хăйсем мана курсанах хăраса тараççĕ. Çавăнпа епĕ вĕсенчен хăраса тăмарăм. Пĕрре пĕшкĕнтĕм те пĕр пысăк упине йарса тытрăм. Анчах вăл, чи пысăк упи пулсан та, манăн алра кушак çури пек çеç туйăнат, хăй ман çине куçĕсене сиктермесĕр пăхат, манран хăранипе сиксе чĕтрет. Пăхатăп — манăн ура вĕçĕнче тепĕр пысăк упа хăйĕн ултă çурипе мĕшĕлтетсе çӳрет. Епĕ вĕсене те тытса пиншак кăсйине йатăм. Сакăр упа йанă пулсан та, манăн кăсйа çурри таран та тулмарĕ. Вĕсене упасем кăна мар, ытти тискер кайăксене те тытса йама пулат, терĕм.

Тепĕр утăм йарса пусрăм та хĕррисенче пит çӳлĕ хăйахсем ӳсекен шурлăх патне çитсе тăтăм. Çав хăйахсем хушшинче пит пысăк тигрсем хĕвел ăшшипе хĕртĕнсе харлаттарса çывăраççĕ. Ахаљ сунарçă вĕсене нийепле те шыраса тупайрас çук, тупсан та вĕсем патне пырайрас çук.

Епĕ хам çакнашкал телейлĕ пулнăшăн савăнсах кайрăм. Савăнма та тивĕçлĕ. Ара кун пек пысăк çын пулман пулсан, çак тĕлĕнмеле çĕршыва та килсе кураймастăмччĕ, тигрсем ăçта пурăннине те пĕлместĕмччĕ.

Малтан епĕ миçе тигрне шутлама пуçларăм. Анчах вĕсем пит нумай — вĕсене ирччен те шутласа пĕтерес çук. Çавăнпа шутласа тăрса вăхăта та ирттерес темерĕм, пĕшкĕнтĕм те тӳрех икĕ тигрне йарса тытрăм.

Тигрсем, ӑйӑхран хӑраса вӑраннипе, тайгана чӗтретсе ҫухӑрма тытӑнчӗҫ. Вӗсен сассипе ҫывӑракан тигрсем пурте сиксе тӑчӗҫ те, шӑтӑк михӗрен тӑкӑнакан пӑрҫа пек, унтала-кунтала сапаланса пӗтрӗҫ. Алла йарса тытнӑ тигрсем те пӗтӗм вӑйран тарасшӑн пулчӗҫ, пӗри пуҫ пӳрнерен ҫыртса илчӗ. Анчах вӑл ҫыртни мана шӑши ҫыртни пек ҫеҫ пулчӗ. Епӗ ҫапах-та тигрне хытах ҫилентӗм, шӗвӗр пӳрнепе сӑмсинчен шак! тутартӑм. Унӑн ҫӑварӗнчен йун палкаса йухма пуҫларӗ. Епӗ йунне шӑлса аппаланса та тӑмарӑм, икӗ тигрне те кӑсйана йатӑм, хам виҫӗ пусӑм тусах арӑслансем йышлӑн пурӑнакан вырӑна ҫитсе тӑтӑм.

Арӑслансем пӗрте тигрсем пек мар иккен, вӗсем калама ҫук чейе. Вӗсем манӑн ура пуснипе хуҫӑлса аннӑ йӑваҫ сассипех вӑранчӗҫ. Анчах хӑйсем тарса пытанмарӗҫ, тӳрех хама тапӑнма пикенчӗҫ. Пӗр арӑсланӗ ҫӗр ҫӗмӗрсе ҫухӑрса йачӗ те атӑ пуҫӗнчен ҫыртса илчӗ. Епӗ урана пӗрре ҫеҫ силлерӗм, атӑ пуҫӗнчен ҫыртса илнӗ арӑслан ҫич сакӑр сухрӑма ывтӑнса ӳкрӗ. Ҫакна курсан, ытти арӑслансем хӑрасах ӳкрӗҫ. Хӑшӗсем самантрах таҫта тарса пытанчӗҫ, манӑн пата чи пысӑккисем кӑна тӑрса йулчӗҫ. Епӗ вӗсене текех вӑрҫтарса та тӑмарӑм. Чи пысӑк икӗ арӑсланне тытса кӑсйана йатӑм та хам каллех малала утрӑм.

Вӑл кун епӗ Уссури тайгинче лӑпах кӑнтӑрлаччен ҫӳрерӗм. Ҫапла пур вырӑна та ҫитсе куртӑм, унта пурӑнакан тискер кайӑксене пурне те пӗрер мӑшӑр тытрӑм. Манӑн пиншак кӑсйисем те хӗррипе танах тискер кайӑксемпе тулчӗҫ.

Кун каҫ йеннеле сулӑнчӗ. Манӑн хырӑм калама ҫук выҫса ҫитрӗ. Епӗ тайгара пӗр столовой шыраса тупрӑм. Унта вӑрман касакан 500 рабочи валҗи пысӑк хурансем-

пе виçĕ тĕслĕ апат пĕçерсе хатĕрленĕ. Анчах вăл апатсем виçĕ çăвар кăна пулаççĕ. Паллах, виçĕ çăвар хырăма йăпатма та çитмест, вăрман касакан рабочисем те выçах тăрса йулĕç тесе, епĕ апатне çимерĕм. Килте йуратнă карчăк пĕр ăсан пĕçерсе хунă пулĕ, киле çитем те хырăм сарличчен çийем, тесе васкаса киле май утрăм.



Тухгăрсем пусмасем тăрăх хăпарса кайрĕç те мана пур йенчен те иглеме тытăнчĕç.

Çул çинче манăн сасартăк хырăм пакăртатма пуçларĕ. Епĕ хăракан пулса тата хытăрах утрăм. Часах хамăр йалтан виçĕ çухрăмра ларакан Карăшлăх пулђницине çитрĕм.

Карăшлăх пулђницине иртнĕ çул кăна турĕç. Вăл виçĕ хутлă. Хăй, сăртра ларнăран, таçтанах çутăлса курăнат. Çавăн пек пысăк пулсан та, вăл маншăн пĕчĕк пукан майлă çеç туйăнчĕ. Епĕ вăрăм çул хыççăн пит ывăнса çитнĕччĕ. Лармали меллĕ вырăн шыраса йĕри-таврала пăхса çаврăнтăм, анчах мана лармашкăн çак пулђницăсăр пуçне урăх нимĕнле вырăн та пулмарĕ. Епĕ пулђницă йăтăнса анас-

ран, хуллен ун тăррине лартăм, пĕр кантăкĕнчен йерипен шаккаса тухтăрсене тухма ыйтрăм.

Чăнкăр-р! тесе çĕмĕрĕлчĕ пуљница кантăк ĕ.

Çакăн хыççăн пуљницăра ĕçлекен çынсем пурте сиксе тухрĕç, мана курсан, тĕлĕнсе хытсах кайрĕç. Самантрах вĕсем пусмасем тупса ман таврала лартса тултарчĕç. Тухтăрсем çав пусмасем тăрăх хăпарса кайрĕç те мана пур йенчен те итлеме тытăнчĕç.

— Мĕн ыратат? — тесе ыйтрĕ пĕр тухтăрĕ.

— Вар пакăртатат, — тетĕп çакна.

— Мĕн те пулин чĕр йапала çимерĕн-и? — тет тухтăр. Епĕ ăна, Уçтук варĕ пуçĕнче тĕлĕнмеле курăк вăррине çисе, çапла пысăкланса кайни çинчен каласа патăм.

Тухтăрсем татах тĕлĕнсе кайрĕç. Аллисемпе пуçĕсене тытса мана пĕчĕклетмели меле шухăшласа кăларма ларчĕç.

— Тупрăм, тупрăм! — тесе кăшкăрса йачĕ ват тухтăрĕ.

— Ăна касторкă çеç ĕçтермеле, вара çав усал курăкăн вăррине те тасатса кăларма пулат, — тет.

— Вара пĕчĕкленсе малтанхи пекех пулатăп-и?—тетĕп.

— Пулма пултаратăн, — теççĕ тухтăрсем.

Епĕ хам кăсйаран пĕр ывăç арăслансемпе тигрсем туртса кăлартăм та:

— Мана пĕчĕклетсен, çаксем вара хама та, сире хăвăра та çисе йама пултараççĕ, терĕм.

Тухтăрсем хăраса кăвакарсах кайрĕç, айвантараххисем тӳп те тӳп месерле кайа-кайа ӳкрĕç.

— Хăрама кирлĕ мар, — терĕм те арăслансемпе тигрсене кайала кăсйана чиксе лартрăм. Тухтăрсем вара ман кăсйари тискер кайăксене мĕн тăвасси çинчен шутлама тытăнчĕç, часах вĕсене емелпе вĕлерме килĕшрĕç.

— Епĕ хэмăр колхозра зоологи сачĕ тăватăп, çавăнпа

вĕсене темĕн тусан та вĕлерттерместĕп, — терĕм çаксене.

Пĕр тухтăрĕ мана тарăхсах çитрĕ те:

— Апла пулсан, ăçтан килнĕ çавăнтах кай! — тесе йатлаçса вăрçма пуçларĕ.

— Ара, епĕ Лапшу Çтаппанĕ пулатăп вĕт, — терĕм.

Тухтăрсем тин палласа çитрĕç мана. Хăйсем пурте ал парас шутпа ман йеннеле аллисене тăсрĕç, епĕ вĕсен аллисене кача пўрнепе тĕрте-тĕрте çеç тухрăм. Çакăн хыççăн тухтăрсем каллех манăн кăсйари тискер кайăксене мĕн тăвасси çинчен шутлама пуçларĕç.

— Нумай шутлама та кирлĕ мар. Сирĕн ара, операци тăвас умĕн çынсене шăршлаттармали емел пулĕ? — терĕм.

— Пур, пур, — терĕç тухтăрсем.

— Пур пулсан, тискер кайăксене çавна шăршлаттарса çывратăр та, хама пĕчĕклетĕр! — терĕм.

Тухтăрсем савăнсах кайрĕç. Малтан çав емеле шăршлаттарса кăсйари тискер кайăксене çывратрăмăр, вĕсене пульница картишĕ тулли вырттарса тухрăмăр. Шăнса кайасран, кашнинех шăналăксемпе витсе хутăмăр. Кайран, тухтăрсем ман çăвар патне çитекен вăрăм пусма шыраса тупрĕç те, çавăн тăрăх витри-витрипе касторкă çĕклесе хăпарма тытăнчĕç.

Çирĕмултă витре касторкă ĕçсен, манăн вар-хырăм пĕтĕмпех тасалса çитрĕ те, епĕ малтанхи пекех пĕчĕкленсе йултăм, пульница тăрринчен çĕре пусма тăрăх антăм, тухтăрсене чĕререн тав турăм та, тискер кайăксене тийесе кайма тесе, хамăр колхоза нимене чĕнме чупрăм.

Хамăн кăсйасене тултарса таврăннă тискер кайăксене колхоза çĕр те виçĕ лавпа турттарса пытăмăр. Тискер кайăксем виçĕ кун та виçĕ çĕр пĕр хускалмасăр харлаттарса çывăрчĕç. Çав вăхăтра епĕр кашни кайăкĕ валли-

йех тимӗр решеткелӗ уйрӑм читлӗхсем туса хатӗрлерӗмӗр, кайӑкӗсене кашнинех ӑйӑхран вӑранса ҫитиччен, ҫав читлӗхсене хупрӑмӑр.

Ҫапла пирӗн колхозӑн хӑйӗн калама ҫук пысӑк зоологи сачӗ пулса тӑчӗ. Вӑл сат таврала епӗр ҫӳлӗ хӳме тытса ҫаврӑнтӑмӑр, алӑкӗ тӑррине виҫӗ тӗрлӗ краскӑпа

| ТӖНЧЕРИ ЧИ ЧАПЛӐ ТА ПАЛЛӐ СУНАРҪӐ<br>**ЛАПШУ ҪТАППАНӖ**<br>ТУНӐ ЗООЛОГИ САЧӖ |
|---|

тесе вывӗскӑ ҫырса ҫапрӑмӑр.

Ҫав сат директӑрне мана хамах суйласа лартрӗҫ. Епӗ вӑл сата Октабӗр револуци уйавӗ кунӗ уҫрӑм. Демонстраци иртнӗ хыҫҫӑн, манӑн тискер кайӑксене курма тесе, мӗнпур халӑх пухӑнчӗ. Епӗ чи малтан хамӑр колхозри ача сатне ҫӳрекен ачасене кӗртсе кӑтартрӑм.



# ТУПМАЛИ

Стр.

Сунарçă пулса пĕр каçрах çĕр те икĕ куйан тытрăм . . . 7
Тилĕ тытма та вĕрентĕм . . . . . . . . . . . . . . . . . . 13
Пăсара пирки ĕмĕрте пĕрре суйма та тиврĕ . . . . . . 22
Кашкăрне чĕрĕллех тытрăм, анчах сылтăм аллăм аманчĕ . 29
Пĕр упашăнах виçĕ талăк йăвăç тăрринче çывăртăм . . . 38
Çăка хăвăлĕнче ларсах арăслана чĕрĕле тытрăм . . . . . 47
Саккăр персех пĕр лав пăчăр тытрăм . . . . . . . . . . 55
Пахчал кооперативне вăлтасем килмен пулсан, кăвакал та тытас çукчĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 63
Хуркайăксене те лавĕ-лавĕпех тытаттăм . . . . . . . . . 69
Йамаш вăрманĕнчи ăсансене пурне те хам хыçран йертсе килтĕм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 75
Тĕлĕнмеле курăк тупман пулсан, Уссури тайгине те çитейместĕмччĕ, зоологи сачĕ те пулмастчĕ . . . . . . . . . 80

Хакĕ 3 т.
Цена 3 р.

КУЗЬМА ЧУЛКАСЬ

# СКАЗКИ ОХОТНИКА

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

ЧУВАШГОСИЗДАТ • 1937